К74.268.3Чув
О-74
Ч-41457

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ тата ăслăлăх министерстви
Вĕрентӳ ĕçĕн федераци агентстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРА КРАЕВЕДЕНИЙĔ

*Лекци курсĕ*

Шупашкар
2007

Национальная библиотека ЧР
4-041457

ББК 83. 0я73; 74 268. 3(2Рос. Чув) я73
О - 741

Осипов, Н. Н. ЧУВАШСКОЕ ЛИТЕРАТУРНОЕ КРАЕВЕДЕНИЕ : курс лекций / Н. Н. Осипов, О. В. Скворцова. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т им, 2007. – 52 с.

...ета ГОУ ВПО «Чувашский ... И. Я. Яковлева»

...т филологических наук, зав. ... Чувашского государственного ...ьев, кандидат филологических ...ры ГОУ ВПО «Чувашский ...им. И. Я. Яковлева»; В. В ...т кафедры чувашского языка ...гический университет им. И.Я.

4-41457

Национальная библиотека Чувашской Республики

ПРОВЕРЕНО
20 10

© Осипов Н. Н., Скворцова О. В., 2007
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева», 2007

ОБЯЗ...
БЕСП...
ЭКЗЕМПЛЯР
412

# КӐРТĔМ

Чăваш сăмахлăх ăслăлăхне юлашки çулсенче литература краеведенийĕ ăнлав кĕрсе хăйĕн вырăнне тупрĕ. Литература караеведенийĕ вăл е ку тавралăхăн илемлĕ литературăпа çыхăннă пур енĕсене те тĕпчекен ăслăлăх. Чăваш литература краеведенийĕ нумай çул ĕнтĕ сăмахлăхпа сапăрлăх тата ытти ăслăлăхсен пĕр пĕтĕмĕшле пайĕ пулса аталанать. Апла пулин те чăваш литература краеведенийĕ хăй уйрăм ăслăлăх шайне çĕкленме пултарчĕ. Чăваш литература краеведенийĕн аталану çул-йĕрĕн пуçламăш тапхăрĕ XX ĕмĕрĕн малтанхи çулĕсем шутланаççĕ. Çак ăслăлăх асăннă ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче палăрмаллах вăй илет. Кăна В. П. Никитинăн «Чăваш енĕн литература вырăнĕсем» (1984) кĕнеки те çирĕплетет. Унсăр пуçне учитель-литературоведсен хăш-пĕр статьисем те литература краеведени аталанăвĕн çулне туптаççĕ.

Литература краеведенин çамрăк ăрăва вĕрентӳпе воспитани панă чухнехи пĕлтерĕшĕ пысăккине кура юлашки çулсенче çак дисциплинăна чăваш чĕлхипе литература учителĕсем хатĕрлекен вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентӳ планне кĕртрĕç. Сирĕн аллăрти кĕнеке чăваш литература краеведенийĕн лекци курсĕ. Унта студентсен асăннă курса алла илес тесен мĕн-мĕн пĕлмеллине, литература краеведенийĕн ĕç мелĕсемпе меслечĕсене, литература краеведени курсĕн паллăрах ăнлавĕсемпе ăслайĕсене кĕскен те туллин çутатаса пама тăрăшнă. Материала темăсем çине пайласа панă. Кашни тема хыççăн вĕренекенсен пĕлĕвне, хăнăхăвне тĕрĕслемелли ыйтусем, студентсен хăйсем тĕллĕн тумалли ĕçсен тĕсĕсене кăтартнă. Вăл е ку темăпа туллинрех паллашас, пĕлĕве малалла аталантарас текенсемшĕн кашни тема хыççăнах усă курмалли литературăн списокне кăтартнă. Студентсен пĕлĕвĕн шайне тĕрĕслемелли меслет – зачет тата асăннă курса кĕретсĕр уйрăмра вĕренекенсем те вĕреннине шута илсе кĕнекене зачет ыйтăвĕсене, реферат темин тĕслĕхĕсене те кĕртнĕ. Аслă шкулта пĕлӳ илекен студентсем литература краеведенийĕ курса вуннăмĕш семестрта лекцисем итлесе тата хăнăху занятийĕсем иртерсе алла илеççĕ, пĕлӳ тата хăнăху пахалăхне зачет парса çирĕплетеççĕ.

Кр.

# 1 ТЕМА

## ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРА КРАЕВЕДЕНИЙĔН УТĂМĔСЕМ

Юлашки çулсенче шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçне вăйлатмашкăн унăн ăслайĕсемпе çул-йĕрĕсене тĕпренех улăштарса çĕнетрĕç. Çак ĕçĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – вĕренĕве пурнăçпа, халăха усăллă ĕçпе çыхăнтарасси, воспитанире сăмахпа çеç мар, мĕнпур комплекслă майсемпе усă курасси. Ахальтен мар шкул программинче этем чун-чĕрине, ăс-хакăлне аталантарасси литература вĕрентĕвĕнчен çав тери нумай килни пирки пусăмласах палăртнă.

Пурнăç юхăмĕ класри ĕçрен класс тулашне те тухма хистет. Литературăн шкул тулашĕнчи витĕмлĕ майĕсем нумай. Вĕсенчен чи паллăраххисем – краеведени çул çӳревĕсем, шыравĕсем, тĕпчевĕсем. Акă, пуçламăш классенче çут çанталăкпа паллаштаракан пĕчĕк экскурсисем ирттересси йăлара. Кĕçĕн классем кружоксене хастар, вăталăххисем походсене хавасланса çӳреççĕ. Литература краеведенине шыравсемпе, тĕпчевсемпе çыхăнтарни аслă классенче чылай сисĕмлĕ ăнăçу кӳрет.

Краеведени вăл – вырăнти историе, географие тата культурăна тĕпчесе пĕлни тенине пĕлтерет. В. Бианки каланă тăрăх, краевед вăл – чи малтанах тĕпчевçĕ, хăйне евĕр пĕчĕк Колумб. Вăл хăйĕн тăван тавралăхне çав тери юратать, çакă вара ăна тăван енри вăрттăнлăхсене уçса пама пулăшать, ахаль çынсем курман енсенех тупса палăртма май парать.

Краеведени ĕçĕ ачасенче патриотлăх туйăмне аталантарать, вĕсен тавракурăмне сарать, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма ыйтать. Çавăн пекех ачасем çынсен хутшăнăвĕсене тарăнрах ăнкарма пуçлаççĕ, тĕрлĕрен фактсене пĕр-пĕрипе танлаштарса пăхса хăшĕ тĕрĕс пулнине суйласа илме вĕренеççĕ. Çакă литературăри тĕп туртăмсене пăхса тухнă вăхăтра, пĕр-пĕр çыравçă пултарулăхĕ литература аталанăвĕн историйĕнче еплерех вырăн йышăннине кăтартнă чухне çав тери кирлĕ. Писатель пурăннă, çуралса ӳснĕ вырăнсемпе тĕплĕнрех

паллашни, вăл ăçта-ăçта çитсе курнине сăнани ачасене пĕр-пĕр хайлава тарăнрах ăнланма пулăшать.

Çавăн пекех ачасем литература произведенийĕ мĕнлерех çыраннине хăйсем шыраса тупнă фактсемпе те çирĕплетме пултараççĕ. Краеведени занятийĕсем ачасене тăван çĕре юратма, унăн илемĕпе пуянлăхне перекетлеме вĕрентеççĕ. Çак занятисем урлах ачасем мĕн пĕчĕкрен сăнама, кĕнекесенчи фактсене хăйсем шыраса тупнисемпе танлаштарса пăхма хăнăхаççĕ. Раççей Вĕрентӳ министерствин пĕр йышăнăвĕнче çапла палăртнă: «... Краеведческий материал используется на уроках литературы при изучении биографии писателя, истоков его творчества, истории создания отдельных произведений. Более широко краеведческие материалы применяются на факультативных занятиях».

Шкулти краеведении ĕçĕ пирки чăваш учителĕсем революцичченхи тапхăртах хускатма пуçланă. Çак ĕçе пуçарса яраканĕ вăл – И.Я. Яковлев. Октябрь революцийĕ хыççăн çĕршывра тĕрлĕ наци çыннисен хăйсен историне, тавралăхне, пурлăхпа ăс-хакăл пуянлăхне тĕпчес туртăмĕ вăйланать. Çĕнĕрен йĕркеленнĕ облаççемпе республикăсенче тăван тавралăха тĕпчесе вĕрентекен ушкăнсем тума пуçлаççĕ. 20-мĕш çулсенче Шупашкарта Чăваш çĕршывне тĕпчекен ушкăн йĕркеленсе ĕçлеме тытăнать. Çак паха пулăма пула 1928 çулти çĕртме уйăхĕн 15-21-мĕшĕсенче Шупашкарта чăваш краевечĕсен I съезчĕ пулса иртет. Шел пулин те çак ушкăн нумай вăхăт хушши ĕçлеймест.

20-мĕш çулсен вĕçĕпе 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вĕрентӳ ĕçĕнче çĕнĕлле реформăсем пулса иртеççĕ. Çавна май вĕрентӳ программинче ачасене пĕлӳ панă чухне тăван литература урокĕсенче краеведении ĕçĕн ăслайĕсемпе май килнĕ таран туллинрех усă курма сĕннĕ.

Чăваш çĕршывĕнчи шкулсенче краеведени ĕçĕ çине 50-60-мĕш çулсенче тимлĕрех пăхма пуçлаççĕ. 1954 ç. «Маршруты туристических походов и экскурсий пионеров и школьников по изучению Чувашской АССР» ятлă кĕнеке кăларнă. Унта «Пирĕн тавралăхри халăхăн сăмах тата сăрă ăсталăхĕ» сыпăк пур. Ку вăл литературăпа фольклор краеведенийĕн ыйтăвĕсене ятарласа хускатнă

малтанхи статьясенчен пĕри. Çавăн пекех кунта походсемпе экскурсисен 14 маршрутне тĕплĕ çырса кăтартнă.

1959- мĕш çулта Е. В. Владимиров профессор «Русские писатели в Чувашии», 1970 ç. «Межнациональные связи чувашской литературы» кĕнекесем кăларать. Çаксем республикăри «литература географине» йĕрленĕ пĕрремĕш утăмсем. Кĕçех чăваш писателĕсен йĕрĕпе çӳрекен учительсем те тупăннă, вĕсен ĕçне çутатакан статьясем те курăна пуçланă. Акă, тĕслĕхрен, Комсомольскири вăтам шкул учительници Анна Павловна Кокорева «Чăваш литературин кружокĕн ĕçĕсем», «Литература кружокĕ тата краеведени» статьясенче кружок членĕсемпе шкул тулашĕнче ирттернĕ ĕçсем çинчен тĕплĕ каласа панă. Вĕсем тăван ялти тата хăйсен тăрăхĕнчи чапа тухнă çынсемпе тĕл пулусем ирттернĕ, кашни вĕренӳ çулĕ вĕçĕнчех экскурсисемпе походсенче пулнă, тăван тавралăхри паллă вырăнсемпе, çынсемпе тĕплĕнрех паллашнă. Унтан походра пухнă экспонатсенчен стендсемпе витринăсем, альбомсем йĕркеленĕ.

Краеведени ыйтăвĕсемпе учительсем çеç мар, литература меслетлĕхне аслă шкулта вĕрентекенсем те кăсăкланни куç кĕрет. Ку енĕпе уйрăмах Д.С. Филипповăна, И.И. Одюкова, Л.П. Сергеева, И. Тенюшева, В.П. Станьяла, З.С. Антоновăна т. ыт. те палăртмалла.

Ентеш писательсен хайлавĕсемпе паллаштарни шкул ачисен çырас кăмăлне çĕклет. Вĕсем хăйсем те çыравçăсен пултарулăхĕпе хавхаланса «Тантăш», «Тăван Атăл», «Хыпар» тата ытти хаçат-журнала е район хаçатне çырса тăма пуçлаççĕ. Литература краеведенийĕпе интересленекен учительсем вĕрентнĕ ачасем литературăпа истори предмечĕсене тĕплĕн пĕлни унивеситета килекен абитуриентсем тĕрĕслев экзаменĕсенче лайăх паллăсем илнинчен те уççăнах курăнать. Хăйсен тавралăхĕнче çуралса ӳснĕ писатель е паллă çын пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчени ачасене тăван литературăн пĕтĕм процесне ăнкарса илме, произведени пахалăхне пурнăçри

пулӑмсемпе ҫыхӑнтарса виҫме, ӑна хӑш вӑхӑтра, мӗнле лару-тӑрура ҫырнине чухлама май парать.

Шкулсенче 70-мӗш ҫулсен вӗҫӗнче литература краеведенийӗн ӗҫӗ палӑрмаллах лайӑхланнӑ. Ҫак ҫулсенче уйрӑмах литература уявӗсем ӑнаҫлӑ иртнӗ. Вӗсем 4 тапхӑрлӑ пулнӑ: малтан уяв шкулта пулнӑ, унта ҫӗнтерӳҫӗ ятне илнисене районти ӑмӑртӑва янӑ, районта мала тухнисене республикӑри литература уявӗсене хутшӑнтарнӑ. Республикӑра мала тухнисем вара Пӗтӗм Раҫҫейри литература уявне кайма тивӗҫнӗ.

**Ыйтусемпе ӗҫсем**

1. Чӑваш литература краеведенийӗн тӗп тӗллевӗсем.
2. Тӑван тавралӑх тӗпчевне irrтермелли тӗп принципсем.
3. Хӑвӑр ентеш ҫыравҫӑ пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗплӗн тишкермелли ӗҫсен планне тӑвӑр.
4. Шкулти краеведени ыйтӑвӗсене чӑваш учителӗсем хӑш тапхӑрта хускатма тытӑннӑ. Ҫак ӗҫе пуҫарса яраканӗ кам.
5. Краеведени ыйтӑвӗсемпе литература меслетлӗхне аслӑ шкулта вӗрентекенсем камсем-камсем кӑсӑкланнӑ.

**Литература**


Никитин, В. П. Чӑваш енӗн литература вырӑнӗсем. – Шупашкар, 1984.

Литературное краеведение в школе/ сост. М.Д. Янко. – М., 1976.

Беккер, Э. Г. Литературное краеведение как одно из средств раскрытия связи литературы с жизнью // Вопросы анализа литературного произведения в школе. – М., 1962.

Мочалкина, Ю. И. Кружок литературного краеведения // Литература в школе. – 1971. – № 4.

# 2 ТЕМА
## ЛИТЕРАТУРА ЙӖРЛЕВӖН ӖҪ МЕСЛЕЧӖПЕ ӐСЛАЙӖСЕМ

Тӑван тавралӑхри литература йӗрӗпе ҫӳрекен учитель ӗҫӗ литературовед-тӗпчевҫӗ ӗҫӗ манерлех. Класпа ӗҫленӗ вӑхӑтрах унӑн наукӑри ҫӗнӗлӗхӗсене асӑрхаса пыма, ансат тӗллевсемпе ларма, вӑрах шыравсем тума тивет. Литература краеведенийӗн меслечӗсемпе ӑслайӗсен, майӗсемпе мелӗсен хӑйне евӗрлӗ уйрӑмлӑхӗсем те сахал мар. Вӗсене учителӗн хӑйӗн те, вӑл вӗрентекен ачасен те алла илмелле, унсӑрӑн нимӗнле шырав та пулма пултараймасть. Краеведени ӗҫӗ вӑл таҫта урамра, хирте, ялта, хула музейӗнче тумалли япала тесе шутлани тӗрӗс мар. Шкул тулашӗнчи ӗҫ майӗсене учитель урокри ӗҫпе тачӑ ҫыхӑнтарма пултарсан, урок хыҫҫӑнхи ларусенче-кружокра, клубра, пӗрлешӳллӗ-урокра пуҫланӑ ӗҫе малалла тӑссан кӑна ӗҫ кал-кал кайма пултарать.

Шкулти краеведени вӗрентӳ теорийӗпе воспитани ӗҫӗн пӗр пӗтӗм принципӗсене тытса пырать. Унӑн меслетлӗх никӗсӗнче педагогика ӑслӑлӑхӗн тӗллевӗсем, урӑхла каласан, вӗрентӳпе воспитание пурнӑҫпа тата ӗҫпе ҫыхӑнтарасси ҫинчен калакан принципӗсем выртаҫҫӗ.

Литература краеведенийӗн паллӑрах принципӗсем ҫаксем:

1) шкулти краеведени ӗҫӗн калӑпӑшӗ, мелӗсем вӗрентӳ программипе ҫирӗп ҫыхӑнса тата ачасен аталанӑвӗпе, пӗлӗвӗпе, пултарулӑхӗпе шайлашса тӑмалла;

2) тӑван тавралӑха тӗпчессине пур предметсемпе те (истори, географи, биологи, литература, фольклор) пӗр килӗшӳллӗ (комплекслӑ) туса пымалла;

3) краеведении ӗҫне куллен тата системӑллӑн йӗркелесе аталантармалла;

4) шыравсене тӗпчевлӗ ирттерме хӑнӑхтарса, вӗренекенсен пултарулӑхне пӗр чарӑнми ӳстермелле;

5) краеведенин пурнӑҫпа ҫыхӑнуллӑ усӑллӑ енӗсене ҫӗнетсе, пуянлатса пымалла;

6) краеведени ӗҫӗнче ачасен малашлӑх ҫул-йӗрне палӑртма (профориентацие) май паракан енсемпе усӑ курмалла;

7) литература краеведенийӗн ӗҫне интернацилле воспитани тӗллевӗсемпе пӗрлештермелле;

8) краеведени йӗрлевӗсене тӑван халӑх культурин палӑкӗсене упрассипе тӳрремӗнех ҫыхӑнтармалла.

Шкулти краеведени системине, унӑн организацилле тытӑмне, хӑш ыйтупа камран мӗн ыйтмаллине, кампа канашламаллине учителӗн аван пӗлес пулать.

Республикӑри краеведени ӗҫне ачасен экскурсипе туризм станцийӗ, учительсен пӗлӗвне ӳстерекен институтпа аслӑ шкулсен кафедрисем, районти краведени штабӗ (вӑл роно, методика кабинечӗ, район музейӗ е историпе культура палӑкӗсене упракан общество ҫумӗнче пулма пултарать) тата вырӑнти краевед-учительсен методика пӗрлешӗвӗ йӗркелесе тӑрать.

| | | |
|---|---|---|
| Чӑваш республикин ДЭТСӗ | Районти культура палӑкӗсене сыхлакан пай е музей ҫумӗнчи краеведени штабӗ | Вӗрентӳ институчӗ, аслӑ шкулсен кафедрисем |
| Краеведсемпе туристсен районти слечӗсемпе олимпиадисем | Районти учитель-краеведсен методика пӗрлешӗвӗ | Методкабинет ирттерекен кареведенипе туризм семинарӗсем |

Шкулти учитель-краеведсен методика пӗрлешӗвӗ

Шкулти краеведени штабӗпе музей совечӗ

| | | | |
|---|---|---|---|
| Литература краеведенийӗ | Истори краеведенийӗ | Географи краеведенийӗ | Ҫут ҫанталӑк |

краеведенийĕ

Класс тулашĕнчи ушкăнсем

| Краеведени кружокĕ | Краеведени клубĕ | Йĕрлевçĕсен отрячĕ | Краеведени музейĕ е пӳлĕмĕ |
| --- | --- | --- | --- |

Шкулти краеведени ĕçне писательсен союзĕн пĕрлешĕвĕ, «Тантăш», «Самант» редакцийĕсем те çăмăллатма пултараççĕ. Шкулсенчи кулленхи краеведени ĕçне республикăри çутĕç министерствипе районти çутĕç пайĕсем йĕркелесе, тĕрĕслесе тăраççĕ.

Районти краеведени штабĕ таврари краеведсен семинарне йĕркелет, методика пулăшăвĕ парать.

«Краевед-филологăн Чăваш енĕн литературăллă карттипе, Шупашкарти литература музейĕпе, Пушкăрт, Тутар республикинчи, Самар, Саратов, Ульяновск, Пенза облаçĕнчи чăваш вырăнĕсем çинчен çырнисемпе, çулçӳрев карттисемпе паллашмалла, паллă краеведсемпе, ентеш писательсемпе, журналистсемпе тĕл пулмалла – ку вăл тăван литература учителĕн шкула пĕрремĕш çул пырсанах туса ирттермелли ĕç», – тенĕ В.П. Станьял.

Шкул тулашĕнчи литература йĕрлевĕ учитель пĕлсе ертсе пырсан ăс-хакăлпа пĕлӳ, хастарлăхпа ĕçченлĕх çăл куçĕ пулса тăрать. Шкул тулашĕнчи шырав ĕçĕсене музейсем, клубсем, пĕрлешӳсем урлă йĕркелесси çирĕпленчĕ. Анчах та V-VII класс ачисем тума пултарни 9-11 классемшĕн çителĕксĕр, вĕсене пысăкрах тĕллевсем хавхалантараççĕ. Çавăнпа ку ĕçе йĕркеленĕ чухне учителĕн ачасен çул ӳсĕмне те шута илмелле.

Литература краеведенийĕн ĕçĕ йышлă (массăллă), ушкăнлă тата харпăр хăй ĕç ушкăнĕсем çине уйрăлать.

Массăллă ушкăнсем тумалли ĕçсем: литература каçĕсем, викторинăсемпе конкурссем, олимпиадăсемпе конференцисем, тĕл пулусемпе поэзи кăвайчĕсем, вăйăсемпе уявсем. Çак ушкăн çинчех тата шкулти краеведени кĕтесне, пӳлĕмне, музейне уçасси те тăрать.

Ушкăнла ĕç: кружок ларăвĕ, клуб занятийĕ, экскурси, поход, экспедици, калаçу е алçыру журналĕ, альбом е хаçат кăларни.

Харпăр хăй тумалли ĕçсем: кĕнекесемпе документсене тĕпчесси, литература палăкĕсене ўкерсе ăнлантарасси, аса илўсемпе калаçусене çырса йĕркелесси, рефератсемпе кăтарту хатĕрĕсем тăвасси т.ыт.те.

Вĕренў йĕркинче класс тулашĕнче туса ирттерекен ĕçсем тĕрлĕ вырăнта тăраççĕ. Пĕрисене темăна урокра вĕренме пуçличченех тытăнаççĕ. Кăна краеведенин паллашу ĕçĕ-хĕлĕ теме юрать. Теприсене класра вĕреннĕ хушăра пурнăçласа пыраççĕ, кăна хушăмлă ĕç теме юрать. 3-мĕшсем класра вĕреннине тĕпчесе çирĕплетмелле пулса иртеççĕ, вĕсене тĕпчевлĕ ĕç темелле.

Клубсемпе пĕрлешўсем мĕнпур ĕçе кружоксем урлă туса пыраççĕ. Краеведени кружокĕ килти вулавпа, факультативпа тачă çыхăннă. Анчах вăл урок хыççăн юлса тепĕр урок ирттерни пулмалла мар. Кружока ачасен хăйсем интересĕсене кура çўремелле.

Литература кружокĕ – класс тулашĕнчи ĕçсен чи анлă сарăлнă çирĕп форми. «Кружок вăл, – тенĕ Н. Баранский, – класс тулашĕнчи тем тĕрлĕ ĕçсен ярăмне туртса кăлармалли ункă».

Краеведенипе тĕрлĕ кружок йĕркелеççĕ. Истори, литература, фольклор, этнографи краеведенийĕпе шкулта кашни ăстрăм валли уйрăм пĕрер кружок тума пулать.

Литература краеведенийĕн кружокĕ ĕç планĕнче икĕ пысăк пай кăтартса хăварать: 1) теорие вĕренни (лекцисемпе калаçусеем, викторинăсемпе конференцисем ирттерни, рефератсемпе докладсене сўтсе явни); 2) хăнăху пухни (экскурсии, поход, экспедици ирттерни, библиотекăра, музейпа кабинетра, архивра практикум йĕркелени).

Краеведени кружокĕн планĕ урокри материалсем çинче никĕсленет пулсан та, хăйне евĕрлĕхпе уйрăлса тăмалла. Программăра пачах çук темăсене те хускатма юрать. Кружок валли çулталăклăх план туни меллĕ. Хĕллехи, çурхи, çуллахи кану кунĕсене планра манса хăвармалла мар. Вĕсем – çул çўрев валли чи лайăххисем. Планри кашни тĕллеве мĕнле формăпа пурнăçламаллине

те татăклă палăртмалла: хăçан хаçат тухать, ăна кам кăларать; хăçан экскурси пулать, ăна кам-кам хатĕрлет т. ыт. те.

Кружокăн пĕрлехи ĕç формисем чылай, çапах та тĕп вырăнта – кашни ача уйрăм заданипе ĕçлени. Кружокăн çулталăкри ĕçне-хĕлне пĕтĕмлетмелли форма пирки тимлĕ шухăшламалла. Ытларах чухне йĕрлевçĕсен каçĕ е конференци ирттерсе, тепĕр чухне калаçу журналĕ кăларса вĕçлеççĕ.

Кружокăн кабинетра е музейра хăйĕн кĕтесĕ пулмалла. Унта çултан-çул пухăнса пыракан альбомсем, хаçатсем, стендсем, ал çыру журналĕсем, докладсемпе рефератсем, схемăсемпе карттăсем упранмалла.

Республикăри кружоксем çакăн пек альбомсем е стендсем тăваççĕ: «Пирĕн тăрăхри çыравçăсем», «Вĕсем пирĕн шкулта вĕреннĕ», «Ентеш писатель вырăнĕсем», «Пирĕн районта пулнă вырăс (тутар, мари, мордва) писателĕсем», «Пирĕн район çыннисен литературăри сăнарĕ», «Писатель – пирĕн хăна».

Кружоксем аталанса пынăçемĕн шкулсенче пултарулăх пĕрлешĕвĕсем, наука обществисем е клубсем йĕркелеме тытăнчĕç. Литература пĕрлешĕвĕн е клубăн хăйĕн девизĕ, уставĕ, член билечĕ, значок, эмблема, ялав, тум пулма пултарать. Çамрăк краеведсен пĕрлешĕвĕсемпе клубĕсем аслă шкулсемпе, тĕпчев институчĕсемпе, патшалăх музейĕсемпе çыхăну тытмалла, вĕсем хушнипе экспедицисем ирттермелле.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Литература краеведенийĕн паллăрах принципĕсене асăнса тухăр.
2. Республикăри краеведени ĕçне мĕнле организаци тата кам-кам йĕркелесе тăрать.
3. Шкулти краеведени ĕçне мĕнле организацисемпе учрежденисем çăмăллатма пултараççĕ.
4. Клубсемпе пĕрлешӳсем мĕнпур ĕçе мĕнле пулăм урлă туса пыраççĕ.
5. Мĕн вăл кружок, кружок тĕсĕсемпе вĕсен ĕç меслечĕсене асăнăр.

Литература

Строев, К. Ф. Краеведение: Учебное пособие для студентов пединститутов. – М., 1974.

Касилов, Н. Л. Литературно-краеведческий кружок в школе. – М., 1963.

Никитин, В. П. Чӑвашьенӗн литература вырӑнӗсем. – Шупашкар, 1984.

Краткий историко-краеведческий словарь Чувашии: Методические рекомендации по истории и краеведению. – Чебоксары, 1991.

Литературное краеведение Башкирии: Методические указания и программа спецкурса. – Уфа, 1983.

Казмина, Н. Г. Литературно-краеведческий клуб «Поиск» // Литература в школе, 1986. – № 6. – С. 59-62.

Гончаренко, Т. И. Литературно-творческое обьединение // Литература в школе, 1974. – № 3. – С. 62-64.

Кожемякин, Т. П. Литературно-творческий кружок старшекласников// Литература в школе, 1974. – № 3. – С. 64-65.

Луста, Л. П. Развивать литературно-творческие способности учащихся // Литература в школе, 1974. – № 3. – С. 65-66.

# 3 ТЕМА
# ЛИТЕРАТУРА ЕТКЕРЛĔХНЕ ПУХСА УПРАМАЛЛИ МЕЛСЕМ

I. Библиографи йĕркелесси унсăр нимĕнле шырав, экспедици, поход, урок пулма пултараймасть. Вăл виçĕ вариантлă: а) Районта е хăвăр пурăнакан хутлăхра çуралса ÿснĕ, пырса çÿренĕ е килсе пурăннă, шкулпа е урăх коллективсемпе çыхăну тытнă паллă çынсем çинчен; б) хăвăр тăрăхри паллă вырăнсем çинчен; в) истори материалĕсем çинчен татах уйрăм библиографи хатĕрлесси.

Литература краеведенийĕпе экспедицисем ирттерес умĕн çул çинчи районсенче пурăнакан, пурăннă е ĕçленĕ, пырса çÿренĕ е çыхăну тытнă писательсен библиографине тумалла. Ун тăрăх кирлĕ хыпарсене хăвăрт шыраса тупма, асра тытма май килет. Вĕсемех çул çÿревĕн тĕллевĕсене палăртма пулăшаççĕ.

II. Литература краеведени картотекине хатĕрлени

Ăна, «Пирĕн тăрăхри çыравçăсем» ят парса чылай пайсем çине пайлама пулать:

– пирĕн енче çуралса ÿснĕ çыравçăсем;

– пирĕн тăрăхра ĕçленĕ çыравçăсем;

– пирĕн шкулпа çыхăну тытнă çыравçăсем.

Карточкăра çакă палăрса юлмалла:

– кирлĕ çыннăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ (псевдонимĕ);

– пурăннă вăхăчĕ;

– çав вырăнпа çыхăннă тапхăрĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, ку тăрăхра çырнă произведенисем, вăл произведенинче тавралăх сăнлăхĕсем палăрса юлни;

– аса илсе е хак парса çырнисем.

Картотека тунă чухне сирĕн ал айĕнче мĕн пуррине, хăш кĕнекене е документа ăçта тупма май пуррине палăртса хăвармалла, мĕншĕн тесен кайран тĕрлĕрен ыйтупа çав карточкăсене темиçе хут та тытмалла пулать.

Пухса пынă материалсене (хаçат-журнал статйисене, çырса илнисене, ÿкерчĕксемпе схемăсене, адрессене т.ыт.те) уйрăм папкăсенче усрамалла. Папкăсен ячĕсем çакăн пек пулма пултараççĕ:

– писатель кун-çулĕ;

– произведенисен историйĕсем;

– произведенри геройсен прототипĕсем.

Е папка хуплашки çине пĕр-пĕр тема ятне çырса хумалла:

– пирĕн тавралăх çинчен çырнă кĕнекесемпе статьясем;

– пирĕн енчи çамрăксен сăввисем;

– литература кружокĕн историйĕ.

Папка хуплашкин шал енне мĕн-мĕн пуррине çырса хурсан аван.

III. Краевед-учителĕн килти библиотеки

Ал айĕнче пулмалли кĕнекесем: «Чăваш писателĕсем», «Чăваш композиторĕсем», «Чăваш художникĕсем», «Русские писатели о Чувашии», «Русские пистатели о чувашах»;

– истори, географи, çут çанталăк, этнографи, фольклор çинчен кăларнă брошюрăсем.

– кӳршĕ Республикăсенче тухнă краеведени кĕнекисем пулсан аван.

Калăпăр, эсир Тутар республикинчи чăваш районĕсене çитсе килесшĕн е «калаçу экскурсийĕ» ирттересшĕн. Акă Нăрлат, Аксу, Элкел районĕсенче Н. Охотников, Н. Шелепи, П. Хусанкай, Е. Еллиев, Теччĕ районĕнче – И. Яковлев, И. Иванов, М. Акимов, И. Максимов-Кошкинский, А. Алка, Тихăн Петĕркки, Пăва тăрăхĕнче – И. Юркин, Тайăр Тимкки, В. Урташ, Г. Тимофеев, Г. Краснов-Асли вырăнĕсем пур. Çав районсен географине, историне, йăли-йĕркине пĕлмесен йĕркеллĕ калаçу та, экскурси те пулаймасть. Çавăнпа Тутар республикин пурнăçĕпе паллаштаракан кĕнекесемпе туслашма тивет.

IV. Экскурсисемпе походсен маршручĕсен, литература вырăнĕсен тулли карти

V. Техника хатĕрĕсемпе тухăçлă усă курни (магнитофон, фотоаппарат, диктофон т.ыт.те)

Писательсемпе тĕл пулу е литература каçĕсем ирттернĕ чухне сăн ӳкерчĕксем туни, сăмахсене магнитофон кассети çине çыртарса илни, ятарласа

альбомсемпе хаçатсем кăларни, аса илсе каланисене çырса хуни – пурте вĕрентӳпе воспитание усă паракан материал. Уйрăмах писателе лайăх пĕлнĕ çынсем, тăванĕсем каланине çырса илни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Произведенисенче сăнарланнă вырăнсене, писатель çуралнă çурта, пурăннă урама, çӳреме юратнă вырăна ӳкерсе илни те писатель еткерлĕхне пуянлатать. Çавăн пекех ентеш çыравçă ал çырăвĕсене, документчĕсене, сăн ӳкерчĕкĕсене, усă курнă япалисене, ал çырăвĕсене, çырăвĕсене, пичетленнĕ статйисемпе хайлавĕсене, автографне упрасси – каллех краеведăн тĕп ĕçĕ.

Вырăнта тупнă материалсене, çырса илнĕ сăмахсене тĕпчевçĕсемпе, музей е архив çыннисемпе сӳтсе явма тăрăшмалла. Паха материалсем çинчен Шупашкарти архивсене пĕлтерме манмалла мар: тен, ун пек питĕ кирлĕ материал тĕп архивсенче пачах та çук?

Енчен те ачасемпе ентеш-писатель е урăх чыслă çын уявне ирттерме шутларăр пулсан ăна шкулта кăна мар, ял халăхĕ умĕнче те кăтартмалла. Ял клубĕнче, бригадăра, механизаторсен паркĕнче сăвă-юрă янрасан аслисен чунĕ те савăнать. Ентеш çыравçа чыслани ял çыннисене сума суниех пулать.

## VI. Вырăнти хаçат-журналпа усă курни

Вĕренӳ çулĕ пуçлансан учитель аякри архивсене, музейсемпе библиотекăсене кайса ларма май тупаймасть, анчах ку вăл шырав ĕçне манăçа хăвармалла тенине пĕлтермест. Учитель-краеведа куллен пулăшса тăракан çăлкуç вăл – вырăнти тата республикăри хаçат-журналсем.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕн сĕтелĕ çинче чăвашла тухса тăракан хаçатсемпе журналсем пурте пулсан питĕ аван пулмалла. Кирлĕ материалсене «Ялав», «Тăван Атăл», «Самант» журналсенче ытларах тупма пулать.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Вырăнта тупнă материалсене, çырса илнĕ сăмахсене камсемпе сӳтсе явмалла тата ăçта-ăçта ярса памалла.

2. Хăвăр районти паллă çынсен списокне туса хатĕрлĕр; вĕсемпе çыхăннă литература çăл куçĕсене шыраса тупса картотека тăвăр.

3. Хăвăр район хаçатĕнче тухса тăракан «Литература страници» рубрикăна тишкерсе тухăр. (Юлашки 5 çул). Кăмăла кайнă, чи палăруллă материал пирки каласа пама хатĕрленĕр.

4. Тăван тавралăх илемлĕ литературăра сăнарланнине тишкерĕр.

5. Тăван районти шкула кайса литература краеведенийĕ ĕç-хĕлĕпе паллашăр, радио е хаçат валли материал хатĕрлĕр.

Литература

Никитин, В. П. Чăваш енĕн литература вырăнĕсем. – Шупашкар, 1984.

Литературное краеведение в школе/ сост. М.Д. Янко. – М., 1976.

Беккер, Э. Г. Литературное краеведение как одно из средств раскрытия связи литературы с жизнью // Вопросы анализа литературного произведения в школе. – М., 1962.

Мочалкина, Ю. И. Кружок литературного краеведения // Литература в школе. – 1971. – № 4.

Методика историко-краеведческой работы в школе / Под ред. Борисова Н. С. – М., 1982.

Милонов, Н. А. Литературное краеведение. – М., 1983.

Нешумова, Л. М. На родине Салтыкова-Щедрина (О работе литературно-краеведческого кружка) // Литература в школе, 1977. – № 6. – С. 65-68.

Грабарева, С. И. Литературно-краеведческий клуб «Фадеевец» // Литература в школе, 1987. – № 1. – С. 52-55.

Бязырова, В. Т. Литературно-поисковая работа школьников // Литература в школе, 1975. – № 5. – С. 66-67.

Ч-41457
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

# 4 ТЕМА
## ÇЫРУСЕМПЕ ТĔЛ ПУЛУСЕМ, ЙĔРЛЕВÇĔСЕН КАÇĔСЕМПЕ КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ, ĂМĂРТУСЕМПЕ ОЛИМПИАДĂСЕМ

Литература краеведенийĕн ĕçĕнче, кружоксемпе пĕрлешӳсен пурнăçĕнче паллă çынсемпе, библиотекăсемпе, архивсемпе, музейсемпе, уйрăм краеведсемпе çыру çӳретни пысăк вырăн йышăнать.

Пысăках мар çыру пĕтĕм шкул ачин шухăш-кăмăлне çĕклентерет, мăнаç туйăм çуратать. Çыру халиччен пĕлмен çĕре илсе çитерет, пачах пĕлмен çĕнĕ фактсемпе паллаштарать. Çырусене тĕрлĕ тĕллевпе çыраççĕ. Ачасен писатель патне çыру çырас шухăшĕ пĕр-пĕр кĕнекене вуласа калаçу ирттернĕ хыççăн çуралать. Ку самантра учитель писатель-ентеш патне хыпар яма сĕнни те вырăнлă пулмалла. Çыру ярас тенĕ çыравçăн ытти кĕнекисемпе, хаçат-журналта тухнă статйисемпе паллаштарни çыхăну тытас интересе тата ӳстерет.

Писатель-ентеш тăванĕсемпе, ăна пĕлнĕ çынсемпе çыру çӳретни те пархатарлă. Çав çырусене ятарласа альбома пухса пыни паха материал пулса тăрать.

Малтанхи çырăва яланах кружок членĕсем ушкăнпа çыраççĕ. Кайран çыру çырма уйрăм ачана та хушма юрать. Вăлах çĕнĕ çырусене стена хаçатне е альманаха вырнаçтарать, вĕсене шкулти радиопа вуласа парать. Çапла майпа çыру пур вĕренекеншĕн те паллă пулса тăрать.

Писательсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырса пĕлтернипе пĕрлех ачасен ыйтăвĕсем çине хуравлаççĕ, час-часах çĕнĕ хайлавĕсене ярса параççĕ. Ачасем писательсенчен кĕнекесем ярса пама ыйтни килĕшӳллĕ мар. Çапах та ентеш писательрен е çывăх паллашнă, е тĕл пулăва пынă çынран асăнмалăх автограф илни ырă япала.

Тĕрлĕ шкулсенчи ачасем пĕр-пĕрин патне краеведении тĕллевĕсемпе çыру çӳретни аван. Ачасем литература вырăнĕпе çыхăннă фактсем пирки аякри тусĕсене вĕренӳре кирлĕ пулакан нумай хыпар пĕлтерме пултараççĕ. Республика тулашĕнчи чăваш шкулĕсене ачасем час-часах вĕсем патне çитеймен чăвашла кĕнекесене ярса параççĕ.

Пирĕн республикăри литкружоксем, сăмахран, Остерти Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ вăтам шкулпа, Слакпуçĕнчи К. Иванов музейĕпе, Кăнна Кушкинчи И.Я. Яковлев ячĕллĕ вăтам шкулпа, Эверккелти (Куйбышев об.) чăваш класĕсемпе çыру çӳретеççĕ.

Писательпе тĕл пулни – ачасемшĕн те, вĕрентекенсемшĕн те пысăк уяв. Анчах писателе тăван шкула тăтăшах чĕнме май çук. Писатель ĕçлесе пурăнакан çĕре экскурсие, слета, похода кайсан унта тĕл пулу ирттерме меллĕ. Тĕлпулу çинчен, паллах, малтанах çыру урлă калаçса татăлсан шанчăклă. Шкулти тĕлпулусемпе виçеллĕ усă курмалла. Тĕлпулу çине тĕлпулу ирттерни ачасене йăлăхтарса çитерет. Çав хушăрах хăш-пĕр вăтам шкулсенче нимĕнле тĕлпулу та йĕркелемеççĕ. Ентеш писательсемпе кашни вăтам шкултах 2-3 çулта пĕр уяв-тĕлпулу ирттермеллех.

Тĕлпулăва вулакансен конференцийĕ çывăх. Вăталăх классенче конференцире писателĕн пĕр-пĕр хайлавне (повеçне, поэмине) пăхса тухни çитет. Аслă классенче конференци пысăк роман е писателĕн пĕтĕм пултарулăхĕ тăрăх та йĕркеленме пултарать.

Конференци мĕнле ирттересси – кăсăк ыйту. Кунта çирĕпленнĕ мелсем те пур, çĕннине шырамалли те пайтах.

Анат Кĕнерти вăтам шкулта (Шупашкар р.) Л. Агаков пултарулăхне вĕреннĕ чухне конференци валли вăрçăри ачасем çинчен çырнă калавсемпе повеçсене суйласа илеççĕ. Пурте вулаççĕ, рефератсем çыраççĕ, йĕрлевçĕсем Л.Я. Агаков ячĕпе çыхăннă вырăнсене кайран кĕретсĕр йĕрпе çул тытаççĕ. Çул çӳрев писатель мăшăрĕ А. Лазарева çырнă «Армансем авăрма чарăнмарĕç» калава вуланинчен пуçланать. Калавра вăрçă вăхăтĕнчи кӳршĕ ялсен – Акучасемпе Тумлайсен пурнăçне кăтартнă.

Е тата М. Трубинан «Ача чухнехи» автобиографилле повеçне вĕреннĕ вăхăтра Куславкка районĕнчи автор çуралса ӳснĕ, вĕрентсе пурăннă Аслă Куснара çитеççĕ. Ачасем повеçре çырса кăтартнă вырăнсене курнă, писательница вилтăприне пуç тайнă хыççăн ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ, калаçа панисене çырса илеççĕ. Çулçӳревре тупнă материалсем конференцисене çӳллĕ шайра ирттерме пулăшаççĕ.

Кирек хăш произведени тăрăх та çул çӳревирттерме, конференци йĕркелеме май çук. Тăван тăрăхăн «географийĕ» уçăмлă палăрса юлнă калав-повеçсем кăна краеведени конференцийĕшĕн юрăхлă (уйрăмах историлле пулăмсемпе çыхăнуллă произведенисем паха). Аслă классенче пĕтĕмлетӳллĕ темăсемпе («Писатель геройĕсем кĕнекере тата пурнăçра», «Пур-и халĕ кĕнекери пек юрату») танлаштаруллă шыравсем туни вырăнлă. Конфренцисене кĕнеке авторĕсене е геройĕсене (документлă произведенисем пулсан) чĕнни тĕлпулу-конференци ирттерме май парать. Геройсен прототипĕсене те конференцие чĕнме юрать. Вĕсем хăйсен пурнăçĕ çинчен каласа пани хайлаври илемлĕ пайрăмсемпе унăн тĕп шухăшне тарăнрах ăнланма хистет.

Краеведени ыйтăвĕсемпе ятарласа ирттернĕ вулакансен конференцийĕсемпе литература каçĕсем сайра пулаççĕ. Анчах кирек хăш мероприятире те вырăнти тĕслĕхсемпе, краеведни материалĕсемпе усă курма тăрăшмалла.

Меслетçĕсем историпе литература каçĕсене тĕрлĕ тĕссене уйăраççĕ: кинокаç, докладсен каçĕ, монтажкаç (вулав, музыка, юрă, ӳкерчĕксем), çул çӳрев каçĕсем (малтанах суйланă маршрутпа похода кайса килнĕ пек туса калаçни), инсцениревкăсен каçĕ (литература геройĕсен тумĕсемпе е вырăнти тумпа тухса, йăла-йĕрке уявĕсене выляса кăтартни), вăйă-кулă каçĕ, отчет каçĕ т.ыт.те.

Краеведени каçĕсене уйрăм класпа та, пĕтĕм шкулпа та ирттерме меллĕ. Вĕсене пĕр е темиçе ентеш писатель пурнăçĕпе пултарулăхне халалласа йĕркелеме пулать.

Литературăпа фольклор краеведенийĕн каçĕсене пĕрле ирттерни вырăнлă. «Пирĕн ялăн юррисем», «Ял çыннисен ташши-юрри» темăсемпе, сăмахран, фольклор материалĕпе пĕрлех тăван халăхри литература юррисем, хореографсем лартнă ташăсем те вырăн тупма пултараççĕ. Кун йышши темăсем чылай: «Чăваш сăввипе пирĕн таврари такмак», «Литература юмахĕпе ял халапĕ», «Те пуçватмăш, те юмах».

Литературăпа фольклор каçĕсене тăтăшах ирттерме тăрăшмалла. Тăван тăрăхра паллă писатель çуралса ӳснĕ пулсан ун пултарулăхне тĕпченĕ чухне «Ентеш-писатель пултарулăхĕнчи халăх сăмахлăхĕ» е «Ентеш-писатель

итлесе ӳснӗ юрӑсем» тата ытти ҫавӑн йышши тема тупма йывӑр пулмӗ.

Пӗтӗмӗшлӗрех темӑсене суйласа илни олимпиадӑсемпе викторинӑсен каҫне ирттернӗ чухне вырӑнлӑрах. Литература краеведенийӗпе йӗркелекен викторинӑсемпе олимпиадӑсем тема енчен шкул программинчи пайсемпе ҫыхӑнма пултараҫҫӗ. Ытларах вӗсене класс тулашӗнче тупнӑ материалпа усӑ курса ирттереҫҫӗ. Викторина, КВН ӑмӑртӑвӗн, конкурсӑн, олимпиадӑн ыйтӑвӗсене 2-3 эрне маларах пурне те курӑнмалла илемлӗ ҫырса ҫапаҫҫӗ. Вӗсем ҫине хурав шыра-шыра ачасем энциклопедисемпе словарьсене, кӗнекесемпе журналсене пӑхса тухаҫҫӗ, аслисенчен канаш ыйтаҫҫӗ.

Викторинӑсем содержани енчен 3 тӗрлӗ пулаҫҫӗ: 1) уйрӑм тема викторини; 2) пӗр-пӗр предмет викторини; 3) хутӑш викторина. Шкулсенче анлӑ сарӑлнӑ викторина темиснм вӗсем – «Пӗлетӗн-и эсӗ тӑван тавралӑха?» е «Пирӗн ен ҫинчен мӗн ҫырнӑ?» Урокра ытларах тема викторини ирттереҫҫӗ, класс тулашӗнче – пур йышши викторина та аван. Викторина олимпиадӑна хатӗрленмелли лайӑх мел. Ӑна II турпа ирттереҫҫӗ – малтан класра, унтан пӗтӗм шкулта. Чӗлхе, фольклор, литература, истори краеведенийӗпе харӑсах хутӑш ӑмӑртусем ирттерни аван.

Олимпиада – шкулти краеведсен ӗҫне пӗтӗмлетекен уяв. Олимпиадӑсене 3 турпа ирттересси йӑлана кӗнӗ: малтан шкулта, унтан районта, юлашкинчен – республикӑра. Олимпиада комиссийӗ малтан ӗҫ йӗрки ҫинчен калакан хута, ыйтусене, литература списокне хатӗрлет, ятарласа лекцисемпе калаҫусем, шкулсемпе библиотекӑсенче семинарсемпе выставкӑсем йӗркелет. Ӑмӑртӑва хатӗрленнӗ вӑхӑтра отрядсем хӑйсене панӑ маршрутсемпе экспедицисене кайса килеҫҫӗ, отчетсем хатӗрлеҫҫӗ. Литература пӳлӗмӗсемпе музейсен смотрне ирттереҫҫӗ. Олимпиадӑна чи лайӑх выставкӑсемпе ытти материалсене тӑратаҫҫӗ.

**Ыйтусемпе ӗҫсем**

1. Меслетҫӗсем историпе литература каҫӗсене мӗнле тӗссене уйӑраҫҫӗ.

2. Викторинăсем содержани енчен миçе тĕрлĕ пулма пултараççĕ.

3. Олимпиадăсене миçе турпа ирттересси йăлана кĕнĕ.

4. Хăвăр ĕçлекен е практикăра пулнă шкулта ирттермелли викторина е олимпиада ирттермелли ĕçсен планне тăвăр.

Литература

Заруцкий, Б., Сидников, А., Солдатов, И. Олимпиады по краеведению: Из оптыта работы. – М., 1965.

Прессман, Л. Литературное краеведение в школе. – Куйбышев, 1955.

Белоусов, Д. А. Литературно-краеведческий кружок в сельской школе. – М., 1987.

Ефимов, Л. А. Роль краеведческого кружка в патриотическом воспитании школьников // Историческое краеведение в школах Чувашии: опыт, проблемы и перспективы. – Чебоксары, 1988.

Орлянская, Г. Р. Сочинение о людях родного поселка // Литература в школе, 1981. № 5. – С. 50-51.

К 110-летию со дня рождения М. горького. Методические рекомендации по подготовке Всероссийского литературного праздника школьников // Литература в школе, 1978. № 1. – С. 62-65.

Касатова, Г. П. Рукописный альманах // Литература в школе, 1982. № 5. – С. 49-50.

## 5 ТЕМА
## ЛИТЕРАТУРА ТАВРАПĔЛĔВĔН ÇĂЛКУÇĔ – АРХИВ

Литература таврапĕлĕвĕн чи кирлĕ задачисенчен пĕри вăл – халиччен никам та пĕлмен (палăртман) фактсене шыраса тупасси. Çак ĕçе çăмăллатма нумай чухне вырăнти тата тĕп хуласенчи архив материалĕсем пулăшаççĕ. Архив материалĕсен фончĕ иксĕлми пуян. Çавăнпа та тăрăшса шырани чылай чухне çĕнĕлĕхсене тупма май парать. Анчах та ку ĕç çăмăл маар. Çамрăк тĕпчевçе архивра ĕçлеме уйрăмах пысăк чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх кирлĕ, мĕншĕн тесен пур чухне те вĕçне-хĕрне тухса пĕтме май çук. Пĕчĕк çĕнĕлĕхе палăртма та тепĕр чух уйăх, çулталăк кирлĕ.

Архивра пуçласа ĕçлекенĕн чи малтанах архивсен системи пирки тĕплĕн пĕлмелле. Пирĕн çĕршывра тĕп патшалăх архив фончĕ тата крайсемпе облаçсен архивĕсем пур. Патшалăх архивĕсем пирки «Государственные архивы СССР» (М., 1956) тата вырăнти çул кăтарткăçсем урлă тĕплĕнрех пĕлме пулать.

Архива каиччен чи малтан хăвăра интереслентерекен темăпа пичетленнĕ материалсемпе туллин паллашмалла. Архивра ĕçлемелли ятарлă йĕрке пур. Архив директорĕ патне ĕç темипе тĕллевне палăртнă план-проспектпа пымалла. Архив материалĕсемпе ĕçленĕ чухне кирлĕ фактсене çырма ятарлă карточка йĕркелемелле. Унта çак япаласене палăртмалла: 1) архив ячĕ; 2) фонд ячĕпе номерĕ; 3) ĕç номерĕ; 4) ячĕн номерĕ; 5) ĕç пуçламăшĕпе вĕçĕн дати.

Литература краевечĕшĕн чи кирлĕ материалсем çаксем шутланаççĕ: писателĕн ал çырăвĕсем, унăн аса илĕвĕсем, дневникĕсем, çырăвĕсем, автографĕсем.

Шкулти ĕçре уйрăмах очерк жанрне вĕреннĕ чухне архив материалĕсем чи паха япала пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен очерксен тата ытти публицистика жанрĕсен никĕсĕнче чăн пурнăçран илнĕ пулăмсемпе фактсем выртаççĕ.

Истори темипе çыхăннă повеçсемпе романсем çырнă чухне те çыравçăсем час-часах архиври хутсемпе усă кураççĕ.

Писатель биографийěпе унăн йăх несĕлне тĕпченĕ чухне те, çыравçă ĕçĕ-хĕлĕн обществăри пĕлтерĕшне тупса палăртма та каллех архив материалĕсем çине таянма тивет. Архив хучĕсем уйрăмах вырăнта çеç палăрнă çыравçăн пултарулăхне тарăнрах тĕпчесе пĕлме май параççĕ. Çыравçă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕлтерекен хутсем тĕрлĕ çĕрти архивсенче те упранма пултараççĕ. Акă Л. Н. Толстоя илес пулсан ун çинчен çырнисене Мускав, Санкт-Петербург, Хусан, Пушкăртстан, Кавказпа Крым, Курскпа Воронеж, Астраханьпе Арзамас, Орелпа Казань архивĕсенче тупма пулать.

Çавнашкал тĕслĕхсем чăваш çыравçисем хушшинче те пур: Çеçпĕл Мишши – Украина, Шупашкар, Канаш районĕ, Крым.

Писательсен килти архивĕсем çав тери паха материал шутланаççĕ.

**Литературăпа сăмахлăх шыравĕн йĕрĕсем**

Сăмахлăх шыравĕн йĕрĕсем тĕллевĕсене кура харкамăн ушкăнпа, пĕрлĕхпе (союз е общество урлă), музей хастарĕсемпе, клуб членĕсемпе, экспедици отрячĕсемпе пулса пыраççĕ. Вĕсене еплерех пурнăçланине кура çакăн пек ĕçсен çине пайлама пулать:

1) Ентеш çыравçă е паллă çын тĕрленчĕк ӳкерчĕкĕсенче, илемлĕ литература хайлавĕсенче тăван тавралăх вырăнĕсене çутатса хăварнисене пухни, хăйсем çинчен калакан материалсене шыраса тупни, тишкерсе хаклани.

2) Ентеш çыравçăсемпе, журналистсемпе, паллă ăстасемпе калаçасси, вĕсене çамрăк çыравçăсемпе тĕл пултарни.

3) Вырăнти çамрăк çыравçăсен, литература ушкăнĕнчи ачасен пултарулăхне хаклани, сăвă-юрă каçĕ йĕркелени; çамрăксен çулçӳрев кĕнекине пахалани, хайлавсене ăмăртуллă çыртарни, ятарлă альманах е журнал кăларни.

4) Тăван тăрăхăн литература, культура летопиçне йĕркелесе пыни, ăна ӳкерчĕксемпе, видеосюжетсемпе пуянлатса пыни.

5) Хăвăр тăрăхри литературăпа халăх уявĕсен, сăнавĕсен тата ытти паллă ĕçсен календарьне туни.

6) Авалхи палăксене пухни, управлăха илни, вăл шутра истори культура, фольклор эткерне пухни, сайра тĕл пулакан кĕнеке журнала пухни.

7) Тăван тавралăх çинчен юрă-ташăллă, калаçуллă-кăтартуллă каç йĕркелени. Çавна валли ятарлă пӳлĕм, музей е класс туни.

Ыйтусемпе ĕçсем

1. Районти е республикăри архивсенчи ĕç мĕлĕсем пирки каласа парăр.

2. Çыравçăсем мĕнле хайлавсем çырнă чухне часчасах архиври хутсемпе усă кураççĕ.

3. Хăвăр тăрăхри е паллакан пĕр-пĕр паллă çыннăн е культура деятелĕн япалисене архива памалли йĕркене каласа парăр.

4. Çыравçăн килти е çемье архивĕ литературовед краеведа мĕнле пулăшу пама пултарать.

Литература

Матросов, И. Архиври хутсен вăрттăнлăхĕ. – Шупашкар, 1992.

Строев, К. Краеведение. – М.: 1974.

# 6 ТЕМА
## МУЗЕЙ – ЙĔРЛЕВÇĔСЕН ЦЕНТРĔ

Шкул музейĕсем вĕрентӳре çирĕп вырăн йышăнчĕç. Вĕренӳ кабинечĕ, тематика пӳлĕмĕсем шкул музейĕпе тачă çыхăннă, ăна пуянлатса пыма пулăшаççĕ.

Музейсен историйĕ вăрăм, йышĕ тĕрлĕ. Пысăк совет энциклопедийĕнче кăтартнă тăрăх патшалăх музейĕсем – 1860. Вăл шутра краеведении музейĕсем – 511, истори музейĕ – 199, искусствоведени музейĕ – 171, Асăну музейĕ – 242 т.ыт.те. Пĕлтерĕшне кура музейсем Раççей, республика тата вырăнти пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ. Вĕсен хăйсен типĕсем пур. Чи анлă сарăлнă тип – халăха ăслăлăх пĕлĕвĕ паракан музейсем, унтан – тĕпчев музейĕ. Музейсен тата профиль ушкăнĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Музей профильне вăл пĕр-пĕр наука, искусство, промышленность, хуçалăх пайне çутатнине кура палăртаççĕ. Музей çурчĕсемпе пӳлĕмĕсен архитектури тем тĕрлĕ те пулма пултарать: заповедник-музей, ял-музей, усадьба-музей, катакомба е çĕр айĕнчи музей, кермен-музей, çурт-музей, хваттер е пӳлĕм-музей, павильон-музей, палăк-музей т.ыт.те. Пĕр-пĕр паллă çурт, арман, пăрахут, самолет, вакун е автобус паха музей пулса тăнă тĕслĕхсем те чылай. Юлашки çулсенче палăк-музейсем лартасси вăй илсе пырать. Тĕслĕх: Киев патĕнчи Новые Петровцы ялĕнчи Днепр çинчи çапăçусен диорамăллă памятник-музейĕ. Уçă пĕлĕт айĕнчи музей комплексĕ йĕркелени музей ĕçĕнче çĕнĕ тапхăр çитнине кăтартса пачĕ. Тĕслĕх: Латвири пĕлĕт айĕнчи этнографи музейĕ.

Чăваш республикинче литература музейĕсен йышĕ нумаях мар: К. Иванов ячĕллĕ литература музейĕ, Канаш районĕнчи Çеçпĕл музейĕ, Шупашкар районĕнчи Иккассинчи Н. Шупуççынни музейĕ т. ыт. те. .

Ытларах чухне шкул музейĕсем – комплекслă краеведени музейĕ шутланаççĕ. Вĕсем истори, биологи, географи, геологи ăслăлăхĕсене, литература пурнăçĕпе, ĕçне, çар паттăрĕсене, колхозпа ял ĕçне-хĕлне, шкул историне пĕтĕçтерсе тăраççĕ. Юлашки тапхăрта тĕрлĕ профиллĕ музейсем йĕркелесси вăйланса пырать. Мĕнле профиль суйласа илесси вырăнти пуянлăхран килет. Пĕр çĕрте ĕçпе çар, тепĕр çĕрте литературăпа ӳнер музейĕ

пулни вырӑнлӑ. Таврари шкул музейӗсем, пысӑк музей филиалӗсем пулса, кашни урӑх профиль суйласа илсен усӑллӑрах.

Тӗслӗхрен, Шупашкар хулинчи 16-мӗш вӑтам шкулта – А.С. Пушкин музейӗ, 23-мӗшӗнче – партизан мухтавӗн, 29-мӗшӗнче – ҫурҫӗр тинӗс моряксен музейӗсем йӗркеленнӗ. Ялти шкулсен те профилӗсем тӗрлӗ. Сӑмахран, Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрваш ялӗнче Хумма Ҫеменӗ писатель, Моисей Спиридонов художнике, Алексей Майраслов скульптор т.ыт.те ҫуралса ӳснӗ. Унти музей – литературӑпа искусство центрӗ, унӑн хӑйӗн «Пӗчӗк Третьяковки» пур.

Юлашки ҫулсенче уйрӑм чӑваш ҫыравҫисене халалланӑ харкам музейсем Чӑвашенре тата чӑвашсем пурӑнакан ытти ҫӗрсенче усӑлни пирки те асӑнса хӑвармалла. Чӑвашсен ҫыруллӑ культурин историйӗпе тӗплӗн паллаштаракан музейсем Чӑваш, Чӗмпӗр, Пушкӑрт, Тутар тата ытти республикӑсемпе облаҫӗсенче уҫӑлнӑ. Вӗсен йышне Пушкӑрт респуликинчи Слакпуҫ ялӗнче чӑваш литературин классикӗсене К. Ивановпа Я. Ухсая халалласа уҫнӑ ҫурт-музея, Чӗмпӗрти «Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ тата И.Я. Яковлев хваттерӗ» музей комплексне, Чӑваш республикинчи Канаш районӗнчи Ҫеҫпӗлти Ҫеҫпӗл Мишшине халалланӑ музей тата ытти тӗрлӗ музейсене кӗртмелле. Халь кӑна асӑннӑ музейсен ӗҫ-хӗлӗпе, вӗсен фончӗсен пуянлӑхӗпе паллаштаракан ятарлӑ ҫулкӑтартмӑшсем те пичетленсе тухнӑ. Ҫапах та ку таранччен тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармалла мар. Паянхи куна илес пулсан чӑваш литература аталанӑвшӗн вӑй-халне шеллемесӗр уйрӑмах тӑрӑшнӑ пур ҫыравҫӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗн паллӑрах енӗсене ҫутатакан ятарлӑ ҫуртсем ҫукрах. Сӑмахран, чӑваш поэзийӗн анинче халиччен каламан нумай-нумай ҫӗнӗлӗхсен авторне Г. Айхине халалланӑ ятарлӑ вырӑн ӑҫта тата хӑҫан уҫӑлассине те татаса паман-ха...

Музейсен ятарлӑ фончӗсем пур: 1. Ӑслӑлӑхпа документаци фончӗ; 2. Сыхлав фончӗ; 3. Ӑслӑлӑхпа тӗпчев фончӗ; 4. Пӗлӳпе воспитани фончӗ. Ку тӗлӗшрен музейсем тӗрлӗ фактсене пуҫтараҫҫӗ: ҫутҫанталӑкпа обществӑ аталанӑвӗ, ҫав обществӑри ҫыннӑн ӗҫӗ-хӗлӗ

(ăслăлăхпа документсем). Сыхлав фончĕн тĕллевĕ – пухнă материалсене килес ăру валли сыхласа хăварасси. Ăслăлăхпа тĕпчев фончĕ музей тĕрлĕрен ăслăлăх тĕпчевĕсем урлă этем обществон экономикипе политики, культури еплерех йĕркеленсе аталаннине сăнать. Пĕлӳпе воспитани фончĕ этем пурнăçĕн историпе культура аталанăвĕ çине тимлĕрех тинкерсе пăхас, ăна хаклас туйăмсене аталантарас тĕлĕшпе ĕçлет. Музейсен тĕп тĕллевĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) чăваш республикинчи музей ĕçĕ еплерех аталанса пынине тĕпчесси, унăн ĕç ăслайĕсене тупса палăртасси çавна май çынсене пĕлӳпе воспитани, методика пулăшăвĕ парасси.

2) музейсен фончĕсене тата филиалĕсене йĕркелесси, вĕсен ĕç-хĕлне планласси, вĕсенче тĕрлĕ мероприяти ирттерме пулăшасси;

3) тĕрлĕрен ăслăлăх центрĕсенче пултарулăх союзĕсемпе, наукăн, культурăн тата ӳнерĕн чи паллă деятелĕсемпе туслă çыхăну тытасси. Çак тĕллевсене пурнăçа кĕртме музейсем çакăн евĕр практикăлла задачăсем пурнăçлаççĕ: 1)яланах Раççейри тата ытти халăхсен музейĕсен паха опычĕсемпе паллашса тăраççĕ, вĕсен ĕçне-хĕлне сăнаççĕ, çĕнĕ тенденцисемпе усăллă енсене хăйсен ĕçĕнче усă курма хатĕрлеççĕ, 2)музейсене аталантарас, вĕсен ĕçне халăха усăллăрах тăвас тесе çĕнĕ профилĕсене палăртаççĕ, 3)кивелнĕ экспонатсене вăхăт иртнĕçемĕн çĕнетсе пыраççĕ, çĕнĕ фактсене куракансем патне çитереççĕ; 4)тĕрлĕрен выстакăсем йĕркелеççĕ; 5) тĕрлĕрен наукăпа практика конференцийĕсем йĕркелесе ирттереççĕ; 6)археологи шыравĕсемпе наука экспедицийĕсем йĕркелесе ирттереççĕ.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Тăван тăрăхри литературăпа краеведени музейĕ çинчен каласа парăр.

2. Музейсен тĕп тĕллевĕсене каласа парăр.

3. Музейсен миçе тата мĕнле фонтсем пулаççĕ.

4. Хăвăр тăрăхри литература музейне йĕркелесе уçмалли ĕçсен хисепĕпе пĕлтерĕшне палăртăр.

5. Республика тулашĕнчи чăваш çыравçисемпе çыхăннă литературăпа сăмахлăх музейĕсем пирки каласа парăр.

Литература

Лощанин, Н. Литературный музей и школа. – М., 1976.

Никитин, В.П. Шкулти музей? Питĕ кирлĕ! // Тăван Атăл., 1984. – 11№.

Российская музейная энциклопедия: в 2 т. – М.: Прогресс, «Рипол Классик», 2001. – 436 с.

Российская музейная энциклопедия: в 2 т. – М.: Прогресс, «Рипол Классик», 2001. – 436 с.

Музеи России (комплексные, исторические, естественнонаучные, технические, отраслевые): Справочник / Сост. Гаврилов Ю. А. и др. – М., 1993.

Музеи Чувашской Республики: Справочник. – Чебоксары, 1996.

Музейный комплекс «Симбирская чувашская школа. Квартира И. Я. Яковлева» / Путеводитель. – Ульяновск : Издательство «Корпорация технологий продвижения», 2003. – 24 с.

Жигулина, З. А. Музей клуб «Малая земля» // Литература в школе, 1978. – № 5. – С. 56-58.

Пастернак, С. О. Мы памяти вашей верны // Литература в школе, 1987. – № 5. – С. 55-57.

Нейкен, Л. Л. Школьный краеведческий музей // Литература в школе, 1982. – № 6. – С. 46-48.

Альтшуллер, А. Е. Школьный музей М. Ю. Лермонтова // Литература в школе, 1975. – № 5. – С. 64-66.

Меркович, Л. В. Государственный музей-усадьба В. Г. Белинского и юные краеведы // Литература в школе, 1986. – № 3. – С. 58-60.

# 7 ТЕМА
## ЛИТЕРАТУРА ПАЛĂКĔСЕНЕ ПАСПОРТИЗАЦИЛЕССИ ТАТА ПУХСА УПРАССИ

Литература палăкĕсем шутне çыравçăсен пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе çыхăннă литература музейĕсем, унсăр пуçне вĕсен çывăх çыннисем пурăннă çуртсем, çыравçăсем хăйсем çӳреме юратнă вырăнсем (парксем, ялсем, палăксем) кĕреççĕ.

Палăксене паспортизацилесси краеведении ĕçĕнче чи кирлисенчен пĕри шутланать, мĕншĕн тесен çакă вĕсене сыхласа хăварма пулăшать.

Çурт-музейăн паспортĕнче çаксене палăртмалла:

– музейăн тулли ячĕ, вăл кам аллинче пулни (культура министерстви, наука академийĕ);

– тулли, тĕрĕс адрес, унăн индексĕ, телефонĕ;

– музей содержанийĕ (кашни зала, пӳлĕмне, мĕнле фондсем пулнине, подлинниксем миçе пулнине кăтартмалла);

– музей вырнаçнă çурт çыравçăпа мĕнле çыхăннă. Мĕншĕн шăпах çав çуртра ăна тунă. Хăçан, камăн инициативипе ăна йĕркеленĕ;

– музей ахаль çынсемпе, шкул ачисемпе мĕнле ĕçсем туса ирттерет;

– çав музей патне еплерех çитмелле, мĕнпе çитмелле. Музей хăçан, мĕнле ĕçлет, унта мĕнле йышăнаççĕ;

– музей директорĕн, аслă ăслăлăх сотрудникĕн, экскурсоводăн инициалĕсем (тулли);

– çак музей патшалăх хӳтлĕхĕнче тăрать е çук.

Паспорт çумне вара 2 е 3 фотографи хушса памалла: музей çурчĕ хăй, шалти пĕр-пĕр зал тата залри пĕр-пĕр стенд. Енчен те музей провинцинче вырнаçнă пулсан унта çитмелли географи карттине хурса памалла. Карттăра область е район центрне, е чугун çул станцине паллă тумалла.

Музей-усадьбăна паспортизациленĕ чухне паспортсăр пуçне тата çав усадьбăн планне ӳкерсе тăратмалла, унăн масштабне палăртмалла. Планра çаксем пулмалла: чи паллă объектсем, пĕвесем, кĕперсем, аллейăсем. Енчен те кунта çыравçă вилнĕ хыççăн çĕнĕ çуртсем е урăх заведенисем тунă пулсан вĕсене те кăтармалла, енчен те

çыравçă пуранна вăхăтри хăш-пĕр çуртсем сыхланса юлман пулсан, вĕсем пулнă вырăнсене тупса пунктирпе палăртмалла.

Çавăн пекех усадьба мĕнпе чикĕленнине кăтартни те пысăк усă кӳрет.

Алçыру дневникĕ

Нумай чухне ачасем хăйсен шухăшĕсене çырса хума кăмăллаççĕ. Çавна тума ятарлă дневник хатĕрлеççĕ. Кунта ача хăйĕнпе хăй калаçать, чунне уçса парать. Дневник çырас ĕçре ачасене пулăшни те кирлĕ. Ăна валли вĕсене В.Д. Пришвинăн «Пирĕн кил» кĕнекине вуласа тухма сĕнмелле. Унта В. Д. Пришвин çапла çырни тĕл пулать: «Я пишу для тех, кто чувствует поэзию пролетающих мгновений повседневной жизни и страдает, что сам не в силах схватить их». Э.Я. Цурюпăн «С правдой вдвоем» кĕнеки те паха материал. Дневник çырма пулăшакан ятарлă памятка та тума пулать:

– дневнике кашни кунах çыр, ăна валли канмалли кун кирлĕ мар;

– пĕр-пĕр интереслĕ, чуна хумхантаракан ĕç пулса иртнĕ хыççăн хăвăн шухăшна тӳрех çырса хур, кайран манăçа тухма пултарать;

– мĕн пулни çинчен пĕтĕмпех çырмалла мар, хăвна мĕн килĕшни тата мĕн шухăша яни çинчен çеç çырмалла;

– фактсене пĕлтернĕ чух эсĕ вĕсене мĕнле йышăннине пĕлтер;

– шухăша тăсса ан яр, кĕскен те чи кирлине çырма хăнăх, хăвăн вăхăтна перекетле (çакă сана чи кирлĕ сăмахсене суйласа илме вĕрентĕ);

– çырнă чухне тĕрĕссине кăна пĕлтер (чи малтан хăвна ан ултала).

Сăмахлăх кружокĕ

Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсем тăван ен историйĕпе, унăн культурипе, хамăр тăрăхра пурăнакан çынсен шухăш-кăмăлĕпе тĕплĕн паллаштараççĕ. Çавнашкал фольклор тĕслĕхĕсене пухасси хальхи ăрушăн та, пулассишĕн те паха ĕç пулса тăрать. Çак ĕçе фольклор кружокĕ урлă анлă сарса яма пулать. Сăмахлăх тĕслĕхĕсене пуçтарни халăх чунне витĕр курма пулăшать.

Учитель-краеведӑн фольклор кружокӗ йӗркелеме шут тытсан чи малтан ачасене интереслентерсе яма пӗлмелле. Хавхаланупа интереса чӗртекен чи паха мел вӑл – ачасене шырав ӗçне явӑçтарни. Ача хӑй паллакан çынранах нумай чухне тӗрлӗ çӗнӗлӗх пӗлме пултарать. Фольклор тӗслӗхӗсене пухас тесен ачан тӗрлӗ çынпа курнӑçса калаçма тивет. Учителӗн тӗп тивӗçӗ вара – ачана чи кирлӗ ыйтусем пама хӑнӑхтарасси. Вӗрентекен çакна пурнӑçа кӗртме малтан хӑй ятарласа ыйтусен пуххине хатӗрлет, кайран çавӑнпа ачасене паллаштарать. Фольклорӑн тӗрлӗ жанрӗсене шута илсе, кашни жанр валли уйрӑм ыйтусем пулмалла.

Тӗслӗх: <u>Истори юррисем, балладӑсем</u>

1) Чӑвашсен аваллӑхӗ, тутарсем тапӑнни, Хаяр Иван, Разинпа Пугачев, тӗрлӗ вӑрçӑсем пирки юрӑ-сӑвӑ калакансем мӗнлисене пӗлеççӗ; çав юрӑсене чи малтан камран илтнӗ;

2) Истори юррисене хӑçан тата ӑçта юрланӑ?

3) Хальхи вӑхӑтра çавнашкал юрӑсем юрлаççӗ-и?

4) Балладӑллӑ юрӑсем еплерех çуралнӑ?

5) Вӗсене мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа, еплерех кӗвӗпе юрлаççӗ?

<u>Халапсемпе легендӑсем, юмахсемпе хайлавсем</u>

1) Çак фольклор хайлавӗсем пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрӑлса тӑраççӗ?

2) Хӑш вӑхӑтра хӑш тӗслӗхӗсемпе ытларах усӑ курнӑ?

3) Хӑвӑр ялта е тӑрӑхра хӑш халапӗ е юмахӗ, е легенди чи палли шутланать, мӗншӗн?

4) Вӗсемпе çыхӑннӑ ӗненӳсем, тӗшмӗш-япалисем пур-и? Пур пулсан вӗсем ӑçтан мӗнле пулса кайнӑ?

5) Хӑвӑр ял е хула çинчен мӗнле халапсем тӗл пулаççӗ. Вӗсем тӗрлӗ вариантлӑ пулни мӗнрен килет. Мӗнле топонимика халапӗсен тӗслӗхӗсене пӗлетӗр?

6) Хайла тӗслӗхӗсем тӗл пулаççӗ-и?

7) Юмахсене кама, мӗн тӗллевпе каланӑ?

8) Паянхи вӑхӑтра хӑçан, мӗнле юмахсем каласа параççӗ?

9) Мĕншĕн калаканĕ юмахçă пулса тăнă, юмах каласа парас ăсталăха ăна кам вĕрентнĕ?

10) Хăй юмах юптарса панине юмахçă еплерех йышăнать?

Йăла-йĕрке поэзийĕ

1) Календарлă йăласенчен сирĕн тăрăхра пурнăкансен асĕнче хăшĕсем упрасна юлнă? Ун чухне мĕнле юрă-сăвăпа усă курнă?

2) Паянхи куна чи ĕлĕкхисенчен хăшĕсем сыхланса юлнă?

3) Туйсем ĕлĕкхи вăхăтра еплерех иртнĕ?

4) Паянхи туй мĕнпе уйрăлса тăрать. Туя ĕлĕкхилле тума хăçан пăрахнă?

5) Салтака ăсатас йăлара мĕн çавнашкалах юлнă, мĕн улшăннă?

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем

1) Каласа параканни ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсен пĕлтерĕшне еплерех ăнланать. Унăн шучĕпе вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? Ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе хăçан усă кураççĕ?

2) Тăван тăрăхра паллă ĕç-пулăмсемпе çыхăннă ваттисен сăмахĕсем тĕл пулаççĕ-и?

3) Калаканни хальхи вăхăтра çуралакан ваттисен сăмахĕсемпе малтанхисем хушшинче уйрăмлăхсем асăрхать-и?

Тупмалли юмахсем

1) Тупмалли юмахсене кам кама хăçан калать. Сирĕн тăрăхра тупмалли юмахсен мĕнле тĕсĕсем тĕл пулаççĕ?

2) Тăван тăрăхри йăла-йĕркесемпе, пурнăç йĕркипе, кунти çут çанталăк уйрăмлăхĕсемпе çыхăннă тупмалли юмахсем пур-и?

3) Тупмалли юмахсене сарас, тпчес ĕçре шкул, библиотека, радиопа телевидени еплерех вырăн йышăнаççĕ?

Ача-пăча сăмахлăхĕ

1) Ача-пăча фольклорĕн хăш жанрĕсенче тăван тавралăх уйрăмлăхĕсемпе тĕплĕнрех паллашма май пур?

Çак ĕçе мĕнле йĕркепе туса ирттермелле-ха?

Сăмахлăх хайлавĕсене çырса илес ĕçе пĕчĕк ушкăнпа хутшăнсан аванрах. Ушкăн 3 е 4 çынран тăмалла. Ушкăнри ачасен йышĕ ытларах пулсан тепĕр чухне калаканнине пăлхатса яма пултарать. Кашни ача малтан уйрăм хут çине ыйтусене çырать (ку кашни жанрĕ валли уйрăммăн пулмалла, ыйтăвне çӳлти пайне çырмалла). Сулахай енче – тулли адрес: колхоз, ял е хула, каласа параканнин инициалĕсем, унăн çулĕ, çуралнă çулĕ, вăл ăçта çуралса ӳсни, аякран е урăх çĕртен пурăнма килнĕ пулсан ăçтан пулнине тӳрех палăртса хумалла, хальхи вăхăтра кам пулса ĕçлет е малтан кам пулса ĕçленĕ. Сылтăм енче вара çырса илекенĕн (ачан) инициалĕсем, миçере пулни, шкул ячĕ, миçемĕш класра вĕреннине паллă тумалла.

Пирвайхи тĕлпулусем вĕрентекен ертсе пынипе пулса иртеççĕ. Учитель ум калаçу еплерех пулмаллине кăтартать, ыйтусене еплерех формăллă, хăçан, хăш вăхăтра ыйтмаллине кăтартать.

Пĕрре çырса илнĕ тĕслĕхсене тепре тĕрĕслесен питĕ аван пулмалла, мĕншĕн тесен кун пек майпа вариантсем тӳр килнине тӳрех палăртма пулать. Калаканни малтан пуçа килнĕ шухăшсене тата аса килмен детальсене çĕнĕрен хушса калама пултарать. Çак ĕçе пурнăçланă чухне тата ушкăнри ачасенчен пĕрне – «летописеца» суйласан аван. Вăл тĕл пулу еплерех иртни çинчен хăйĕн шухăшне палăртса хурать, каласа параканнин сăн-питне, характерне, вăл мĕнле калаçнине, хăйне епле тытнине сăнлать. Çакăн пек туни пĕрре кружок ларăвĕнче пухнă материала сӳтсе явнă чухне ăна тарăнрах ăнкарма пулăшать, тепре пулас ăрусемшĕн çав тери паха материал пулать.

Каланине тĕрĕс çырса пымалла. Хăвăртан, пĕр сăмаххине илтсе юлаймарăр пулсан та, нимĕн те хушма юрамасть. Авторĕ епле сăмахсемпе усă курать, çавсене йăлтах çырмалла. Литература сăмахĕпе улăштарма юрамасть. Енчен те пĕр сăмахĕ сиксе юлчĕ пулсан ун вырăнне тире лартмалла, кайран вара тепĕр хутчен ыйтса пăхмалла. Юрă-сăвăра е юмах-халапра диалект сăмахĕ тĕл

пулчĕ пулсан ун ҫине ударени лартмалла, ун пек тумасан сăвăри ритм ҫухалма пултарать.

Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухас ĕҫĕн хăйне евĕр специфики пур. Кунта пуҫтараканăн ăнăҫăвĕ вăл ачасемпе пĕр чĕлхе тупма пултарнинчен нумай килет. Хайлавсене жанрне кура уйрăммăн палăртса пымалла. Кашни текст валли каллех уйрăм паспорт тумалла. Ыйтусем ҫине хуравланисĕр пуҫне тата ятарлă комментари кирлĕ. Комментаринче тĕл пулу атмосфери мĕнле пулнине кăтартмалла, калаканни фольклор ҫинчен мĕн шутланине пĕлтермелле.

Фольклор тĕслĕхĕсене пухнисĕр пуҫне тата калаканăн творчествăлла портретне тусан тата биографине ҫырсан ĕҫ тухăҫлăхĕ пуян пулать. Ҫак ĕҫре чи кирли вăл – ҫав ҫын мĕншĕн халăх сăмахлăхĕпе чунтан интересленнине, вĕсене халь те чĕрере упранине кăтартса парасси.

Ҫак ĕҫе магнитофонпа, фотоаппартпа е киноаппаратурăпа (видеопа) пурнăҫласан унăн пахалăхĕ тата ытларах ӳсет.

Кассета ҫине ҫырса илсен калаканăн сасси те, интонацийĕ те, темпĕ те, калаҫу уйрăмлăхĕсем те упранса юлаҫҫĕ. Фотоснимоксем видео ӳкерчĕксем вара кăтарту хатĕрĕ пулса тăраҫҫĕ.

Ҫырса илнĕ тĕслĕхе вара уйрăм тапхăрапа творчество портречĕпе, биографийĕпе, фотопортречĕпе пĕрле усрамалла. Папка хуплашки ҫинче хăҫан ҫырса илнине, вырăнне, камран ҫырса илнине, кам-кам ҫак ĕҫе хутшăннине, вĕсен фотографийĕсене кăтартмалла.

**Ыйтусемпе ĕҫсем**

1. Уйрăм палăка паспортизацилемелли йĕрке.

2. Чăваш Республикинчи тата республика тулашĕнчи паспортланă паллăрах вырăнсем.

3. Литературăпа фольклор шыравĕн меслечĕсемпе ăслайĕсем.

4. Сăмахлăх шыравĕнче вырăнти хаҫат-журналпа усă курасси.

**Литература**

Пресман, Л. П. Литературное краеведение в средней школе. – Куйбышев, 1955.

Методика историко-краеведческой работы в школе / Под ред. Борисова Н. С. – М., 1982.

Вершинин, Н. Я. Литературный кружок «Маяковец» // Литература в школе, 1983. – № 3. – С. 47-49.

Чащегоров, М. В. Литературный клуб // Литература в школе, 1981. – № 5. – С. 49-50.

Коппель, Е. К. Литературно краеведческий кружок // Литература в школе, 1981. – № 5. – С. 50-51.

# 8 ТЕМА
## ЛИТЕРАТУРА ВЫРĂНĔСЕНЕ ТУХСА ÇӲРЕССИ ВĔСЕНЕ ЙĔРКЕЛЕМЕЛЛИ МЕЛСЕМПЕ МЕСЛЕТСЕМ

### Экскурси, поход, экспедици

Чăваш çĕршывĕн кирек хăш тăрăхĕнче те литература вырăнĕсем çителĕклĕ. Çулçӳрев – шкул тулашĕнчи чи хаваслă та усăллă ĕçсенчен пĕри, вĕрентӳпе воспитанин хăйне евĕрлĕ форми. Çулçӳрев – кану та, шырав та, вĕренӳ те, тĕрĕслев те. Пĕр вăхăт литература йĕрĕпе шырава тухасси вăйланнăччĕ. Паянхи кун пурнăçăн тĕрлĕ сулăнчăкĕсене пула çак юхăм хăйĕн хăватне кăштах чакарчĕ. Çапах та çак ĕç форми патне ачасен интересĕ нихçан та пĕтмест.

### Литература картти

Шкулти литературăпа краеведени кĕтесĕсенче тĕп вырăн литература картти йышăнать. Çак карттă тепĕр чухне ĕç содержанине, объектсен йышне кура литература (историпе литература) е литературăпа ӳнер картти (енчен те унта художниксемпе композиторсем, артистсем пур пулсан) пулма пултарать. Кружок ĕç-хĕлĕн диапазонне кура вăл район, республика е область картти пулма пултарать.

Карттăпа ĕçлессин малтанхи утăмĕ вăл – материал пуçтарасси. Кунта писательсен портречĕсем, сăн ӳкерчĕкĕсем, сирĕн тăрăхра пулнине е ĕçлесе пурăннине çирĕплетекен сведенисем, çырусемпе хайлавсенчен илнĕ е усăлса çӳреме юратнă вырăнсен фотоӳкерчĕксем кĕреççĕ. Портретсемпе фотоӳкерчĕксене тупнă хыççăн тепĕр хутчен хăвăра валли ӳкерсе илмелле (2х3 см), вĕсене овал формиллĕ касса кăларса çав формăллă картонсем çине çыпăçтармалла. Кайран уйрăм тăваткал картонкăсем çине (формачĕ 3х5) çакăн пек текст вырнаçтармалла: çыравçăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, вăл пурăннă çулсем, кĕске цитатăсем.

Карттă поли çине (15-18 см) çакна çырмалла: объект ячĕ, унăн адресĕ, кунта писатель пулни çинчен пĕлтерекен хыпар тата çавăнта вăл мĕн тунă. Мĕнле произведенипе ĕçленĕ, тавралăха епле сăнланă.

Иккĕмĕш утăм – карттă макетне туни. Карттăн формачĕ пӳлĕм анлăшĕнчен экспозици планĕнчен, материалсен шутĕнчен килет. Шкул практикинче анлă сарăлнă формат вăл – 0,9х1,2 м (район картти валли), республика е облаç валли вара – 2х3. Карттă макетне 5 мм фанерăран тума пулать е ватмантан. Карттăна культура палăкĕсен силуэчĕсемпе илем кӳме пулать.

## Литература экскурсийĕ

Литература учителĕн тематикăпа календарь планĕ хатĕрленĕ чухнех ачасемпе çулталăк тăршшĕнче мĕнле çулçӳрев ирттересси пирки шухăшласа хумалла, кирлĕ пулсан историкпа, географпа, биологпа канашласа пăхмалла. Çав вăхăтрах вĕрентекен шкулти музей совечĕ е учитель-краеведсен методика пĕрлешĕвĕ мĕн-мĕн палăртнипе паллашать, хăш класпа хăш ĕçе хутшăнсан лайăхрах пулассине татса парать. Программăн кашни пайĕпех çул çӳрев формине палăртма май пур. Тĕслĕхрен, çакăн пек:

| Программа пайĕ | Çул çӳреве каймалли ĕçпе вырăн |
|---|---|
| I-II. Чăваш халăх сăмахлăхĕ тата ача-пăча сăмахлăхĕ. Юрăсем, такмаксем, ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем | Тăван килте, урамра, ялта – халăх сăмахлăхне пухасси |
| III. Ç. Элкер, Хумма Çеменĕ, М. Ухсай произведенийĕсем | Революччĕнхи пурнăç çинчен каласа пама пултаракан çын патĕнче – каланине çырса, хăйне ӳкерсе илесси |
| IV. Н. Евстафьев, И. Тукташ, Л. Агаков, С. Шавли, Я. Ухсай, В. Алентей, А. Артемьев, Ю. Сементер салтаксен вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен çырнă хайлавсем | Паттăрсен стенчĕпе е кĕтесĕпе паллашасси. Фронтовик килне çитсе каласа панине çырса илесси, наградăсемпе паллашасси. Палăксемпе асăну хăмисем умне чечек хурасси, салтаксем патне çырусем |

| | |
|---|---|
| | çырасси |
| V. Писательсем – çут çанталăк çинчен | Хир-вăрманта пулса пейзаж сăнарлăхне танлаштарса тĕпчесси, тĕрленчĕк çырасси |
| VI. В. Урташ, В. Давыдов-Анатри, Ю. Мишши, И. Тукташ, А. Николаев Шупашкар çинчен çырнисем | Шупашкара (çывăхра пулсан) экскурсие кайса килесси е экскурсие кайран кайма хатĕрленесси |

Çак ĕçсене пĕр класпах, пĕр вĕренӳ çулĕнчех пурнăçлама пулать. Кĕçĕнрех классенче экскурсисен хисепĕ пысăк, аслăрах классенче вара вĕсен шучĕ чакать, анчах вĕсем кăткăсланса пыраççĕ, шырав задачисем те йывăрланаççĕ.

Экскурси объекчĕ – халăх пурнăçĕпе çут çанталăк аталанăвне кăтартакан кирек хăш курăнуллă япала.

Экскурси тĕллевĕ – ачасене воспитани задачисене пурнăçлама пулăшакан туйăмсене, курăмсене, ăнлавсене аталантарса йĕркелени.

Учитель кирек хăçан та пултаруллă экскурсовед пулма тивĕç, мĕншĕн тесен экскурсисен тĕллевĕсемпе принципĕсем уроксенни пекех.

«Экскурси вăл – вĕренӳри тата шкул тулашĕнчи ĕçсен сапăрлăха аталантармалли уйрăм форми, ăна ирттернĕ чухне учитель-экскурсовод ертсе пынипе экскурсант ачасем пурнăçри пулăмсене ятарласа хатĕрленĕ вырăнсенче тӳрех куçăн курса ăнланаççĕ», – тесе палăртаççĕ А.Ф. Родинпа Ю.Е. Соколовский тĕпчевçĕсем «Экскурсионная работа по истории» кĕнекере.

Экскурсисем яланах икĕ пайлă пĕрлĕхрен тăраççĕ:

1) куçпа курни;
2) вĕсене ăнлантарса пани.

Çак икĕ ен шайлашуллă чухне кăна экскурси усăллă та ăнăçлă пулать. Музей залĕсенче пур чухне те каласа ăнлантарма кирлех те мар, унта кашни экспонат çинчен тĕплĕ çырса панисем пур. Урамра е заводра ирттерекен экскурсире вара кашни япала çинчен уйрăммăн ăнлантармалла.

Пуçласа экскурсие хатĕрленекен учительсем час-часах экскурси вырăнĕпе тĕллевне уйăраймаççĕ. «Экскурси

тĕллевĕ – писатель ячĕпе çыхăннă çуртпа паллашасси» тесе çырса хуни тăтăшах тĕл пулать. Ку тĕрĕс мар. Пĕр çуртах тĕрлĕ тĕллевпе курса çаврăнма пулать. Калăпăр, Шупашкарти Володарски урамĕнчи Чăваш наци конгресĕн çуртне архитектура енчен (XIX ĕмĕрти хутăш стиль), истории енчен – Ехрем хуçа çурчĕ литературăпа çыхăнтарса – кунта Çеçпĕл Мишши комсомол обкомĕнче ĕçленĕ тишкерсе пăхма пулать. Вырăнĕ, тĕлĕ – пĕрре, тĕллевĕ вара – тĕрлĕ.

Экскурсисен 3 тĕрлĕ маршручĕ ытларах тĕл пулать. Вĕсем çаксем:

1) хронологиллĕ маршрут (объектсене ĕç мĕнле аталанса пынин йĕркипе кăтартса пыраççĕ).

2) тематика маршручĕ (объектсене темăна уçса панă май, вăхăт йĕркине пăхмасăр кăтартаççĕ).

3) комплекслă маршрут (тематикăн хронологилле маршручĕ).

Литература экскурсийĕсем хăйсен тĕллевĕпе, пĕлтерĕшĕпе, вĕренӳ ĕçĕнчи пахалăхĕпе тĕрлĕ ушкăнсене пайланаççĕ. Сăмахран, çĕнĕ материалпа паллаштаракан экскурси, аса илсе пĕтĕмлетмелли экскурси, çĕнĕ темăна вĕренме пуçличчен ирттерекен кӳртĕм экскурси.

Ку экскурсисем хăйсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

1) пĕтĕмĕшле тишкерӳллĕ (обзорлă);

2) тематика экскурсийĕ.

Пĕтĕмĕшле тишкерӳллĕ экскурси ĕлĕкхипе хальхине тĕрлĕ вырăнсемпе япаласене çавăрса илет. Ку экскурси шутне ытларах ялсемпе хуласем тăрăх йĕркеленĕ маршрутсем кĕреççĕ.

Тематика экскурсийĕ пĕр темăпа çыхăнса тăрать. Калаçу кунта пĕр-пĕр паллă çын, ĕç е пулăм таврă кăна пырать.

Экскурсие хатĕрленесси унăн тĕллевне палăртнинчен пуçланать. Кашни экскурси валли ятарласа тĕллевпе задача лартаççĕ. Тĕслĕхрен, «Шупашкарти литература вырăнĕсем». Экскурси тĕллевĕ – литература вырăнĕсемпе паллаштарса халăх историйĕпе культурине, çĕршывăн ăс-хакăл пуянлăхне хисеплеме, упрама вĕрентесси, мăнаçлăх туйăмне аталантарасси. Экскурси задачи – чăваш халăх культура пурнăçĕпе, Шупашкар хулинчи литературăпа

искусство палăкĕсемпе, чăваш литература классикĕсен К.В. Иванов, Çеçпĕл Мишши тата вĕсен ĕçне малалла тăсакансен ячĕсемпе çыхăннă вырăнсемпе паллаштарасси.

Объектсен шутне те виçеллĕ палăртмалла: вĕсем сахал чухне содержани чухăнланать, нумай пулсан – çиелтен чупса иртме тивет. 4 сехете тăсăлакан тишкерӳллĕ экскурси валли 20-30, тематика экскурсийĕ валли 8-10 объект пулсан юрăхлă.

Маршрут пирки те тĕплĕн шухăшласа хумалла.

Литература экскурсийĕ – илемлĕ çырулăх тапхăрĕ, паллă писатель, фольклорист пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен уçăмлă та ансат каласа ăнлантармалли ăнаçлă форма. Ăна 3 ушкăна уйăраççĕ:

1) биографи экскурсийĕ – ăна писатель пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă вырăнсенче ирттереççĕ: «А.С. Пушкин чăваш çĕрĕнче», «Çеçпĕл Мишшин Теччĕри çулĕсем», «П. Хусанкай – Хусан студенчĕ», «М.Я. Сироткин – Шупашкар профессорĕ»;

2) литература историйĕн экскурсийĕ – ăна литература аталанăвĕн пĕр-пĕр тапхăрне ăнлантарма йĕркелеççĕ. «Литературăллă Шупашкар», «Хусанти чăваш пичечĕ»;

3) литература произведенийĕ тăрăх йĕркеленĕ экскурсие произведенире çырса кăтартнă вырăнсенче ирттереççĕ. «В.С. Алентей геройĕсен йĕрĕпе», «Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине (Атăла мухтакан сăвăсемпе юрăсем тăрăх)».

Çыравçăсен биографийĕн экскурсине хронологи принципĕпĕ, литература историйĕн экскурсине хронологилле тематика принципĕпе, литература произведенийĕсем тата текстсен поэтикин экскурсине яланах тематика принципĕпе ирттереççĕ.

Литература экскурсийĕн маршрутне писатель пурнăçĕпе çыхăннă е унăн произведенинче кăтартнă вырăнсене, ял-хулана кĕртмелле. Маршрута йĕркеленĕ чухне çакна шута илмелле: юлашкинчен кăтартакан объект хăйĕн пĕлтерĕшĕпе пĕтĕмлетӳ тума май патăр. Шупашкарта «И.Я. Яковлев – чăваш халăхĕн мухтавĕ» экскурси ирттерес пулсан ăна наци библиотеки умĕнчи палăк патĕнче вĕçлесен аван. Тĕслĕх вырăнне Патăрьел тăрăхĕнче усă куракан икĕ маршрута илсе пăхар.

**Пĕрремĕш маршрута ăнлантарни**
**(çуран çӳремелли маршрут)**

| *Чаранмалли выранпа вăхăт* | *Экскурсии объекчĕсем* | *Кам çинчен калаçмалла* |
|---|---|---|
| Çĕньял | Ял масарĕ (Г.Айхи вил тăпри), Айхи пурăннă урам | Г.Н.Айхи, Е.Лисина, А.С.Шакин (композитор) |
| Пăлаçи Атăл | Шкулти музей | В.И.Ильметов (композитор), А.Алексеев, В. Игнатьев |
| Аслă Арапуç | Масарта Митта Ваçлейĕн вил тăпри, шкулти музей, Митта Ваçлей пурăннă çурт вырăнĕ | Н. Исмуков (поэт), Миттасем (Ваçлей,Петр),В.Давыдов-Анатри (поэт) |
| Чакă | Ялти илемлĕ вырăн е культура çурчĕ | П.В.Пазухин(фольклорист), Ф.П.Кудрявцев(художник) |
| Тăрмăш | Шкул, артист çуралса ўснĕ çурт | И. Путяков (Çамрăксен театрĕн артисчĕ) |
| Юманлăх кўлли патĕнче канса илни | | |
| Турхан | Шкулти музей, чиркў (ун çыннисем Кокеле вĕренме янă), Кокелен çурт музейĕ | В. Кошкин (Кервен) (поэт), Кокель А.А. художник |
| Çĕньял | Çĕньял шкулĕ | Экскурси пĕтĕмлетĕвĕ, ĕçсем хушни |

**Иккĕмĕш маршрута ăнлантарни (автобуспа çул-çўреве тухмалла)**

| *Чаранмалли выранпа вăхăт* | *Экскурсии объекчĕсем* | *Кам çинчен калаçмала* |
|---|---|---|
| Патăрьел | А.Талвир пурăннă çурт | Алексей Талвир |
| Тикеш | Авалхи хула вырăнĕ | Авалхи чăвашсен историйĕ |
| Арапуç | Масарта Митта Ваçлейĕн вил тăпри, шкулти музей, Митта Ваçлей пурăннă çурт вырăнĕ | Н.Исмуков,Миттасем (Ваçлей,Петр),В.Давыдов-Анатри |

| | | |
|---|---|---|
| Чакă | Ялти илемлĕ вырăн | П.В.Пазухин(фольклорист), И.И. Пахомов таврапĕлӳçĕ |
| Пăлапуç Пашель | Ялти шкул | М.Сакмаров(ача-пăча çыравçи,таврапĕлӳçи), Н. Тельцовпа калаçни (таврапĕлӳçĕ) |
| Шăхач | Ялти шкул | Вырăс писателĕ Антонов Иван Захарович |
| Турхан | Музей çурт, шкулти музей | В. Кошкин (Кервен) (поэт), Кокель А.А. художник |
| Çĕньял | Ял масарĕ (Г.Айхи вил тăпри) | Г.Н.Айхи, Е.Лисина, А.С.Шакин(композитор) |
| Нăрваш-Шăхаль | Шкулти вĕсене халалласа йĕркеленĕ стендсем | Чекушкин, Молодцыгин (артистсем),А.Любимова Раиса Сарпи (поэтесăсем) |
| Патăрьел | шкул | Экскурсие пĕтĕмлетни |

Литература экскурсине малтанах хатĕрленмелле. Учитель урокрах ачасене экскурси тĕллевĕпе, маршручĕпе паллаштарать, биографи, аса илӳ, илемлĕ литература тексчĕсене вулама, сăвăсене пăхмасăр калама, çул çӳрев маршрутĕнче палăртнă вырăнсем çинчен çырнине пухма хушать. Çула тухиччен вĕсене йăлтах тĕплĕ сӳтсе яваççĕ. Кашни ачан ĕç пур: пурте кун çырав кĕнекине тултараççĕ, тĕрленчĕк, сочинении, статья, плакат, фотоальбом валли материал пухаççĕ. Çул çӳрев вăхăтĕнче çынсем каласа панине, курнине çырса пыраççĕ, курнă кашни объекта уйрăм пай туса шĕкĕлчеççĕ. Экскурси хыççăн хаçат-журнал, стенд тата макетсемпе маршрутсен системине тăваççĕ, радиопа тухса калаçаççĕ, тĕл пулусем, «сăмах экскурсийĕсем» ирттереççĕ.

Литература краеведенийĕн аслăрах классенчи ачасем юратакан пысăк ĕçĕ – тăван тавралăхра е аякри вырăнсенче ирттерекен литература похочĕсемпе экспедицисем. Вĕсен пĕрпеклĕхĕ çакă – иккĕшĕн те пĕр тĕллев: ачасене литература тĕпчевне хутшăнтарни, пурнăç пуянлăхне, илемне, нумай енлĕхне курса ăнланма вĕрентни. Апла пулин те уйрăмлăхĕ пур: походра унчченех тупнă, çырса кăтартнă, палăртнă пулăмсемпе паллашаççĕ. Экспедици вара çĕннине ачасене хăйсем

тĕллĕн шырама, тĕпчеме, тавлашуллă ыйтăва татса пама хистет. Экспедици отрячĕсем литература вырăнĕсенче аваллăх палăкĕсене çĕнетеççĕ, çырса кăтартаççĕ, шыраса тупаççĕ, туппине ӳкереççĕ. Унтан доклад е хыпар çыраççĕ, схема, план, коллекци тăваççĕ. Кашни экспедици очет хатĕрлет.

Литература похочĕ вара туризм походне çывăх. В.А. Седов краевед походсене, вĕсен тĕллевĕсене кура, 6 ушкăна пайлать:

1) танлаштару похочĕсем: пĕр-пĕр паллă е литература хайлавĕнче асăннă вырăна танлаштарса пăхни. Тĕслĕх: Х. Уярăн «Таната» романĕнчи тата хальхи «Шурча тăрăхĕ» е Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕнчи пурнăçпа паянхи чăваш ялĕ;

2) биографи похочĕсем: «П. Хусанкай çӳренĕ çул-йĕрсем», «Л. Агаков Етĕрне тăрăхĕнче»;

3) тĕпчевпе биографи: тĕп тĕллевĕ – писательсен пурнăçĕ çинчен халиччен литературоведенире паллă пулман материалсене пухасси. Кун пек походсем экспедицисене çывăх тăраççĕ: «Я.Г. Ухсай пултарулăхĕпе Слакпуç тăрăхĕ», «Кăнна Кушки – Чăваш Афинĕ», «Аслă Арапуç – Миттасен çĕршывĕ»;

4) произведенире ӳкерĕннĕ вырăнсем тăрăх irттернĕ походсем: вĕсен тĕллевĕ– произведенисен пурнăçпа çыхăннă тымарĕсене уçăмлăрах курма хăнăхтарасси, çут çанталăк сăнарĕ. Геройсен характерĕсене уçса пама кирлине, произведенири вăхăтпа вырăн пĕлтерĕшне чухлама вĕрентесси. Тĕслĕх: «П. Хусанкайăн «Улмуççиллĕ Тĕрлемес» поэмин географийĕ».

5) произведенисен пейзаж ăсталăхне тишкерес тĕллевпе irттерекен походсем: «К.В. Ивановăн «Нарспи» поэми тата Силпи тăрăхĕ»;

6) литературăпа фольклор экспедицийĕсем: «Тили юррисем» тата «П. Хусанкай çĕршывĕ».

Литература похочĕсене пĕр тĕрлĕ кăна irттермелле мар. Вĕсем хутăш пулни нихăш енчен те сиен кӳмест. Çул çӳревре комплекслă тĕллевсемпе ĕçлени усăллăрах. Пĕр вăхăтрах писатель биографине те, произведенине те, прототипĕсене те, кĕнекисене кĕнĕ вырăнĕсене те çавăрса илме пулать.

Писатель çуралнă, пурăннă ялтах ун пурнăçне, произведенинче тăван тавралăх мĕнле вырăн йышăннине тишкерме, ун çинчен аса илӳсем пухма, документсем тупма май пур.

Похода хатĕрленесси экскурсие пуçтарăннинчен хытах уйрăлса тăрать. Ăна çанă тавăрса хатĕрленмелле. Литература учительне чăн малтан библиотекарь, историпе географи учителĕсен пулăшмалла. Ачасене вулама сĕннĕ литература шутне илемлĕ тата мемуарлă произведенисем, биографи материалĕсем, вырăнта тухса тăракан хаçат-журнал, историпе географи тĕпчевĕсем кĕреççĕ. Ӳсрес вырăнсем çинчен кино е диафильмсем пăхни пысăк пулăшу кӳрет.

Литературăпа географи карттине туни походăн çул-йĕрне тĕплĕнрех кăтартма, краеведени музейне кĕрсе тухни çитсе курмалли вырăн çинчен малтанах пĕлме пулăшать. Экспедицие хутшăнакан кашни ача хăй тĕпчекен ыйтупа ятарлă пĕлӳ пухмалла.

Экскурси, поход, экспедици материалĕсене йĕркелесе усă курас мелсем нумай:

– çул çӳревре пухнă материалпа ятарлă урок ирттерни;

– экспедици материалĕпе сочинении çырни;

– кĕçĕн класс ачисем умĕнче калаçу-экскурси ирттерни;

– çул çӳрев материалĕ тăрăх киле çыру ĕçĕ пани (статья, тĕрленчĕк, отчет);

– фотоальбомсемпе бюллетеньсем, стена хаçачĕсемпе журналсем кăларни.

Çул çӳрев пĕлĕве ӳстерет, çĕршыва хисеплеме, юратма вĕрентет, халăхăн ĕлĕкхипе хальхи пурнăçне курма хăнăхтарать. Çавăнпа та çул çӳрев – экскурси танлаштарулла и – вăл, походпа экспедици-и – пур енчен те тимлĕ тумалли ĕç.

**Ыйтусемпе ĕçсем**

1. Хăвăр тăрăхри литература карттине йĕркелемелли çул-йĕрсене унта кĕртмелли вырăнсен хисепĕпе йышне палăртăр.

2. Хăвăр тăрăхри литература экскурсийĕсемпе похочĕсен маршручĕсене тăвăр.

3. Литература экскурсине формипе тĕллевне кура миçе ушкăна уйăраççĕ.

4. Литература похочĕсене вĕсен тĕллевĕсене кура миçе ушкăна пайлама пулать.

5. Экскурси объекчĕсен йышне мĕнлисем кĕреççĕ.

6. Хăвăр районăн литература карттине тăвăр.

## Литература

Никитин, В. П. Чăваш енĕн литература вырăнĕсем. – Шупашкар, 1984.

Александров, Ю. Н. Подготовка и проведение экскурсий: Методические рекомендации. – М., 1974.

Шамрай, Т. Н. Туристко-этнографическая программа под девизом «Потерявший память – обречен»: (изучение родного края и развитие туристских навыков в пеших походах) // Классный руководитель. – 2001. – № 7. – С. 30-35.

Яукова, Т. Союз учителя и библиотекаря в воспитании у учащихся интереса к краеведению // Воспитание школьников. – 2006. – № 9. – С. 57-58.

## ДИСЦИПЛИНĂН ВĔРЕНӲПЕ МЕСЛЕТ КĂТАРТĂВĔСЕМ

## СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА

### ТĔП ЛИТЕРАТУРА

*Козлова В.* Кĕлпук пурнăçĕ – халăх пурнăçĕ. («Кĕлпук мучи» поэма тăрăх йĕркеленĕ уяв каçĕ) // Народная школа. – 2003. – №3. – С. 73-80.

*Константинов Ю.С.* О проблемах развития туристко-краеведческой деятельности в общетюркских учреждениях // Теория и причина физической культуры. – 2002. – № 11. – С. 40-42.

*Краткая* чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2001.

*Кузьмина Л.* Кашни урок – шырав: (9-11-мĕш классем) / Л. Кузьмина // Народная школа. – 2005. – № 6. – С. 33-38.

*Литературное* краеведение на уроках русского языка и литературы // Литература: Прелож. к газ. «Первое сентября». – 2004. – №22. – С. 22-26.

*Никонова М.А.* Землеведение и краеведение: [учеб. Пособие для вузов по спец «Педагогика и методика нач. образования»]. – М.: Academia, 2000. – 239 с.

*Российская* музейная энциклопедия: в 2 т. – М.: Прогресс, «Рипол Классик», 2001. – 436 с.

*Российская* музейная энциклопедия: в 2 т. – М.: Прогресс, «Рипол Классик», 2001. – 436 с.

*Самохин Ю.С.* Возрождающийся образ краеведение // Стандарты и мониторинг в оборудовании. – 2000. – №1. – С. 15-18.

*Самохин Ю.С.* Новый ракурс школьного краеведения // Стандарты и мониторинг в образовании. – 2001. – №4. – С. 32-36.

*Самохин Ю.С.* Новый ракурс школьного краеведения // Стандарты и мониторинг в образовании. – 2001. – №3. – С. 40-43.

*Шамрай Т.Н.* Туристко-этнографическая программа под девизом «Потерявший память – обречен»: (изучение родного края и развитие туристских навыков в пеших походах) // Классный руководитель. – 2001. – №7. – С. 30-35.

Яукова Т. Союз учителя и библиотекаря в воспитании у учащихся интереса к краеведению // Воспитания школьников. – 2006. – №9. – С. 57-58.

ХУШМА ЛИТЕРАТУРА

*Александров Ю.Н.* Подготовка и проведение экскурсий: Методические рекомендации. – М., 1974.

*Ашурков В.Н., Кацюба Д.В.,* Матюшкин Г.Н. Историческое краеведение. – М., 1980.

*Белоусов Д.А.* Литературно-краеведческий кружок в сельской школе. – М., 1987.

*Ефимов Л.А.* Роль краеведческого кружка в патриотическом воспитании школьников // Историческое краеведение в школах Чувашии: опыт, проблемы и перспективы. – Чебоксары, 1988.

*Заруцкий Б.А.,* Сидников А.А., Солдатов И.Н. Олимпиады по краеведению: Из опыта работы. – М., 1965.

*Карцов В.Г.,* Мартынов А.И. Музейно-археологическая и краеведческая практика: Программы педагогических институтов. – М., 1970.

*Касимов Н.Л.* Литературно-краеведческий кружок в школе. – М., 1963.

*Краткий* историко-краеведческий словарь Чувашии: Методические рекомендации по истории и краеведению. – Чебоксары, 1991.

*Литературное* краеведение Башкирии: Методические указания и программа спецкурса. – Уфа, 1983.

*Лощанин Н.П.* Литературный музей и школа: Пособие для учителей. – М., 1976.

*Матросов И.М.* Архиври хутсен вăрттăнлăхĕ. – Шупашкар, 1992.

*Методика* историко-краеведческой работы в школе / Под ред. Борисова Н.С. – М., 1982.

*Милонов Н.А.* Литературное краеведение. – М., 1983.

*Музеи* России (комплексные, исторические, естественнонаучные, технические, отраслевые): Справочник / Сост. Гаврилов Ю.А. и др. – М., 1993.

*Музеи* Чувашской Республики: Справочник. – Чебоксары, 1996.

*Никитин В.П.* Чăваш енĕн литература вырăнĕсем: Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 1984.

*Олимпиады* по краеведению: Из опыта работы. – М., 1965.

*Пресман Л.П.* Литературное краеведение в средней школе. – Куйбышев, 1955.

## ДИСЦИПЛИНĂНА ТЕХНИКА ТАТА КĂТАРТУ ХАТĔРĔСЕМПЕ ТИВĔҪТЕРНИ

Дисциплинăна йĕркелесе вĕрентме ҫаксем кирлĕ:

- техника хатĕрĕсем: литературăпа фольклор кабинечĕ;
- аудио, -видеоаппаратура: магнитофон, телевизор, видео, компьютер, эпидиаскоп;
- вĕрентӳпе кăтарту хатĕрĕсем: стендсем, плакатсем, слайдсем, фольклор тĕпчевĕсемпе ҫыхăннă ĕҫсен куравĕ т.ыт.те.

## ТĔРĔСЛЕВ ФОРМИСЕН СОДЕРЖАНИЙĔ

## ХАРПĂР ХĂЙ ТĔЛЛĔН ПУРНĂҪЛАМАЛЛИ ТАТА ТĔРĔСЛЕВ ĔҪĔСЕН ЫЙТĂВĔСЕМ

1. Чăваш литература краеведенийĕн тĕп тĕллевĕсем.
2. Тăван тавралăх тĕпчевне ирттермелли тĕп принципсем.
3. Хăвăр ентеш ҫыравҫă пурнăҫĕпе пултарулăхне тĕплĕн тишкерни.
4. Авалхи литература палăкĕсене тĕпчени.
5. Хăвăр районăн литература карттине, ҫул ҫӳревне йĕркелесси.
6. Тăван тавралăх илемлĕ литературăра сăнарланнине тишкересси.
7. Тăван енри шкулта литература краеведенийĕ ĕҫхĕлĕпе паллашасси, радио е хаҫат валли материал хатĕрлесси.

8. Литература краеведенийĕ музейпа, архивпа тата ытти культура учрежденийĕсемпе еплерех çыхăнура тăрать.

9. Литература палăкĕсене паспортизацилесси, вĕсене упрас, сыхласа хăварас ĕç.

10. Хăвăр тăрăхри паллă поэт – писательсем çинчен халиччен каламаллине тупса палăртасси, тĕрлĕ МИХ-сене çитересси.

ЗАЧЕТ ЫЙТĂВĔСЕМ:

1. Чăваш литература краеведенийĕ аталанăвĕн çулйĕрĕ.

2. «Литература краеведенийĕ» ăнлав, унăн обществăри вырăнĕ, тĕллевĕ.

3. Литературăпа фольклор шыравĕн меслечĕсемпе ăслайĕсем.

4. Сăмахлăх шыравĕнче вырăнти хаçат-журналпа усă курасси.

5. Краеведенин ытти тĕсĕсем.

6. Литература шыравĕсем краеведенин ытти тĕсĕсемпе еплерех çыхăнура тăнине палăртăр.

7. Уйрăм палăка, палăксен ушкăнне паспортизацилемелли йĕрке.

8. Чăваш Республикинчи тата республика тулашĕнчи паспортланă паллăрах вырăнсем.

9. Литература краеведенийĕпе çыхăннă класс тулашĕнчи ĕçсем, вĕсен ĕç-хĕлĕ.

10. Район хаçачĕн кун-çулĕпе паллаштарасси, унти «литература страницине» тишкересси, çамрăк çыравçăсемпе паллаштарасси.

11. Тăван тăрăхри паллă çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарасси.

РЕФЕРАТ ÇЫРМАЛЛИ ТЕМĂСЕМ:

1. Чăваш литература краеведенийĕн утăмĕсем.

2. Шкулти литература краеведенийĕ: ĕнер, паян, ыран...

3. Литература пухса упрамалли мелсем.

4. Пирĕн райхаçатри «Литература страници».

5. Пирĕн тăрăхри литература вырăнĕсем, литература картти.

6. Литература краеведенийĕн кружокĕ.

7. Манăн тăван енĕм – илемлĕ литературăра.

8. Пирĕн тăрăхран тухнă çыравçăсем.

9. Литература краеведенийĕн викторинисемпе олимпиадисем.

10. Литература экскурсийĕ.

11. Литература краеведенийĕн экспедицийĕсем.

12. Ентеш çыравçă йĕрĕпе.

13. Шупашкарти литература вырăнĕсем.

14. Пирĕн районти литература вырăнĕсен çул çӳрев маршручĕ.

15. Тăван тăрăхри литературăпа краеведени музейĕ.

## МЕСЛЕТ КĂТАРТĂВĔСЕМ

Литература вырăнĕсемпе палăкĕсене тишкерни сăмах ăстисем илемлĕх тĕнчине тĕрлĕ вăхăтра мĕнлерех сăнарланине, çавăн пекех халăхăн культурине еплерех витĕм кӳнине, писаетль пултарулăхне хаклама май парать.

Унсăр пуçне пĕр-пĕр çыравçă е паллă çын тĕнчекурăмне туллин ăнланса илсе хак пама пулăшать.

Литература краеведенийĕ çыхăнтарса тăракан ăс-хакăл, культура, ӳнер еткерне паянхи кун шайĕпе пăхса хаклани çителĕксĕр. Халăхăмăрăн, паллă çынсен еткерне упраса хăварса вĕсен пĕлтерĕшĕпе вырăнне ӳссе пыракан ăрăва ăнлантарса пани, упрама, хисеплеме майсем туса пани чăваш халăхĕн сăмахлă культури вăхăт ыйтнă пек, май килнĕ таран аталанса пынине курма май парать.

Учебное издание

Осипов Николай Николаевич
Скворцова Ольга Владимировна

# ЧУВАШСКОЕ ЛИТЕРАТУРНОЕ КРАЕВЕДЕНИЕ

Курс лекций

Подписано в печать 31.05.07. Формат 64x84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 3.2
Тираж 100 экз. Заказ № 598.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38